ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрь 13 ВЫРСАРНИКУН № 243 (9152) Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерта:

К. Е. Ворошилов юлташ Чехословаки Республикин Президенчĕ А. Запотоцкий юлташ патне янă телеграмма (1 стр.).

Г. М. Маленков юлташ Чехословаки Республикин Министрĕсен Совечĕн Председателĕ В. Широкий юлташ патне янă телеграмма (1 стр.).

А. Запотоцкий тата В. Широкий юлташсем К. Е. Ворошиловпа Г. М. Маленков юлташсем патне янă телеграмма (1 стр.).

В. М. Молотов Чехословаки Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. Давид юлташ патне янă телеграмма (1 стр.).

В. Давид юлташ В. М. Молотов юлташ патне янă телеграмма (1 стр.).

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн 1953 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен информациллĕ пĕлтерӳ (1 стр.).

КПСС Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ (2 стр.).

П. Харитонов.—Техникăлла нормировани ĕçне лайăхлатмалла (3 стр.).

МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫЧĔ. Е. Васильева.—Кантăр — пысăк тупăшлă техникăлла культура (3 стр.).

Польшăри рабочисен пĕрлешӳллĕ партийĕн съезчĕ умĕн (4 стр.).

Телеграмма

Чехословаки Республикин Президентне

Антонин ЗАПОТОЦКИЙ юлташа

Прага

Совет Союзĕпе Чехословаки Республики пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕрле килĕштерсе ĕçлесси çинчен Договор тунăранпа 10 çул тултарнă кун, Президент юлташ, ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ ячĕпе тата хам ятпа чĕререн саламласа ырă суннине йышăнма ыйтатăп.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чехословаки халăхне хăйĕн халăх демократи государствине тĕреклетес, туслă Чехословакие пĕрмай вăйлатас тата чечеклентерес, мирпе пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăх интересĕсемшĕн Совет Союзĕпе Чехословаки хушшинчи туслăха çирĕплетес ĕçре малашне те ситĕнӳсем тума ырă сунать.

К. ВОРОШИЛОВ.

Телеграмма

Чехословаки Республикин Министрĕсен Совечĕн Председательне

Вильям ШИРОКИЙ юлташа

Прага

Пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕрле килĕштерсе ĕçлесси çинчен Совет Союзĕпе Чехословаки Республики тунă Договор çине алă пуснăранпа вунă çул тултарнă май, Сиртен, Председатель юлташ, тата Чехословаки Республикин Правительствинчен эпĕ чĕререн саламласа ырă сунние йышăнма ыйтатăп.

Иртнĕ вунă çул çакна çирĕплетсе пачĕ: ку Договор, Европăри мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетме пулăшса, пирĕн çĕршывсен пурнăçĕнчи интерессене тивĕçтерсе тăрать. Халĕ, Германи милитаризмне çĕнĕрен çĕклентерме тăрăшакан Европăри мире юратакан мĕнпур халăхсене тивĕçлипех пăшăрхантарнă чухне, Договор пĕлтерĕшĕ уйрăмах ӳсет.

Тăванла Чехословаки халăхне тата Сире хăвăра халăх демократиллĕ Чехословаки республикине тĕреклетес тата чечеклентерес ĕçре малалла ситĕнӳсем тума ырă сунатăп.

Пирĕн çĕршывсенчи халăхсен ырлăхĕшĕн, Европăри мире тĕреклетес ĕçĕн интересĕсемшĕн Совет Союзĕпе Чехословаки Республики хушшинчи ниçсан арканми туслăх тата пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлесси тĕрекленсе пытăр.

Г. МАЛЕНКОВ.

Советла Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕн Президиумне,

Климент Ефремович ВОРОШИЛОВ юлташа

Советла Социализмлă Республикăсен Союзĕн Министрĕсен Советне,

Георгий Максимилианович МАЛЕНКОВ юлташа

Мускав

Хисеплĕ юлташсем!

Пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн пĕрле килĕштерсе ĕçлесси çинчен Совет Союзĕпе Чехословаки Республики хушшинче Договор туса алă пуснăранпа 10 çул тултарнине пĕтĕм Чехословаки халăхĕ савăнăçлăн паллă тунă кун пирĕн хĕрӳллĕ саламсене тата чунтан-чĕререн саламласа ырă суннине йышăнăр. Çавăн пекех Чехословаки халăхĕ малалла, коммунизмăн çутă пуласлăхĕ патне пĕр чарăнмасăр пыракан ăслă совет халăхĕне туслă пурăнасси çинчен, ăна тав туни тата юратни çинчен шантарса калаиисене йышăнăр.

Совет Союзĕпе Чехословаки Республики хушшинче тунă, 1943 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче Мускаврa алă пуснă Договор халăхсем хушшинчи историри çĕнĕ хутшăнусене, никама пăхăнмаллăхпа пĕр-пĕрин интересĕсене яланах хисеплесси çинче никĕсленсе тăракан хутшăнусене ĕненмелле палăртса тăрать. Халăхсем хушшинчи мирпе туслăх политикин, ленинла-сталинла политикăн шухăшĕпе тунă çак Договор пролетарилле интернационализмăн, халăхсен пĕртанлăхĕпе туслăхĕн принципĕсене палăртать. Ку Договор Чехословакипе Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи тачă союзăн тата пĕр-пĕрне тăванла пулăшса ĕçлессин çирĕп никĕсне хывре, Совет Союзĕпе Чехословаки хушшинчи çыхăнусенче кăна мар, пирĕн Тăван çĕршывăн историйĕнче те чаплă ĕç пулса тăчĕ.

Совет Союзĕ пĕтĕм вăйпа, калама çук хаклă пулăшу пани пирĕн Тăван çĕршыва фашистла чурахăх пусмăрĕнчен ирĕке кăларма май пачĕ. Чехословаки халăхĕ хăйĕн çĕршывĕнчи мухтавлă Совет Çарне—ирĕке кăларнă Çара—юратса тата çав тери савăнса саламларĕ. Совет Союзĕ пире çĕнсе илсе панă ирĕклĕх—чăн-чăн ирĕклĕх, вăл пирĕн халăха хăйне валли историре çĕнĕ çул, ирĕке тухнă тăван çĕршыва телейлĕ, социализмла пуласлăх патне пымалли çул суйласа илме май пачĕ. Совет Союзĕ пирĕн строительствăн мĕнпур облаçĕсенче пире ырă кăмăлпа, тăванла пулăшу парать, Совет Союзĕ пысăк хавасланăхпа пуян та ансăмин опытпа паллашма май парать. Çакă вăл пирĕн халăха экономикăпа культура аталанăвĕнче пысăк ситĕнӳсем тума, пирĕн мĕнпур ĕçсыннисен пурнăç шайне ӳстерме, пурнăçа лайăхлатма пулăшрĕ.

Чех тата словак халăхĕсем хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра социализм тăвас тĕллĕпе мирлĕ, творчествăллă ĕçлеме пултарассĕ, мĕншĕн тесен Совет Союзĕ никам çĕнеймен хăватлă мир лагерĕнчи ытти çĕршывсемпе союзлă пулни, туслă пулни пирĕн Тăван çĕршывăн тĕнчери лару-тăрăвне тĕреклетет, увăн никама пăхăнманлăхĕпе хăрушсăрлăхне хӳтĕлесе тăрать, ăна Мюнхен трагедийĕ урăх нихçан та, нимĕнле формăпа та пулмĕ тесе шанса тăма май парать. Совет Союзĕ халăхсем хушшинчи мирпе туслăхшăн çине тăрса тата паттăррăн кĕрешни вăл çав вăхăтрах пирĕн çĕршывăн телейлĕ пуласлăхĕшĕн кĕрешни пулать. Çавăнпа та пирĕн халăх çак кĕрешӳре шанчăклăн совет халăхĕпе юнашар тăрать, пĕтĕм тĕнчери йывăрлăха çĕмĕрлатас тата тĕнчери тавлашуллă мĕнпур ыйтусене мирлĕ майпа татса парас тĕллĕпе совет халăхĕ тăвакан ĕçсене мĕнпур вăйпа пулăшса пырать.

Паян, Совет Союзĕпе Чехословаки хушшинче пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн килĕштерсе ĕçлесси çинчен Договор туса алă пуснăранпа 10 çул тултарнă чаплă кун, пĕтĕм Чехословаки халăхĕ çак Договор иртнĕ вăхăтрах хăйĕншĕн пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен тав туса тата юратса аса илет тата хăйĕн пуласлăхĕшĕн вăл питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланать. Совет Союзĕпе туслă пурăнни тата союзлă пулни пирĕн Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕн, хăрушсăрлăхĕн, мирĕн, телейĕпе чечеклевĕвĕн никĕсĕ пулса тăрать.

Сывă пултăр совет халăхĕпе Чехословаки халăхĕн арканми туслăхĕ тата союзĕ!

Сывă пултăр мухтавлă Совет Союзĕ, вăл тата хăватлăрах пулса тăтăр, никам çĕнеймен паттăр совет халăхĕ сывă пултăр тата чечеклентĕр!

А. ЗАПОТОЦКИЙ
Чехословаки Республикин Президенчĕ

В. ШИРОКИЙ
Чехословаки Республикин Правительствин Председателĕ

Прага хули, 1953 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ.

Телеграмма

Чехословаки Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне

Вацлав ДАВИД юлташа

Прага

Министр юлташ, Совет Союзĕпе Чехословаки Республики хушшинче пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн килĕштерсе ĕçлесси çинчен Договор туса алă пуснăранпа 10 çул тултарнă май, эпĕ чĕререн саламласа ырă суннине йышăнăр.

Çакна çирĕп ĕненсе тăнине палăртма ирĕк парăр: Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи тăванла туслăх тата пĕр-пĕрипе тачă çыхăнса ĕçлени малашне те пирĕн халăхсен интересĕсене шанчăклăн тивĕçтерсе тăрĕ тата, çавăнпа пĕрлех, Европăри хăрушсăрлăха тĕреклетес тата пĕтĕм тĕнчери мира çирĕплетес ĕçе пулăшса тăрĕ.

В. МОЛОТОВ.

Хисеплĕ Вячеслав Михайлович МОЛОТОВ юлташа,

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕррремĕш Заместительне, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне

Мускав

Хисеплĕ Министр юлташ,

Чехословаки республикипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрипе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăнхи вăхăтра пĕрле килĕштерсе ĕçлесси çинчен Договор туса алă пуснăранпа вунă çул тултарнă ятпа Сире хĕрӳллĕ салам яратăп тата чĕререн ырă сунатăп. Чехословаки республикипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрипе союзлă пуласси çинчен 1943 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче Мускавра Договор туса алă пуснă пирĕн халăх чĕринчи туслă тата тăванла килĕштерсе пурăнас туйăм палăрнă. [illegible]

[illegible]

Сывă пултăр Чехословаки республикипе Совет Союзĕ хушшинчи ĕмĕрлĕх туслăх!

Сывă пултăр Совет Союзĕ шанчăклăн ертсе пыракан, никам çĕнтерейми мир лагерĕ!

ВАЦЛАВ ДАВИД.
Чехословаки республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн 1953 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Декабрĕн 12-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Лару председателĕ—Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн председателĕ С. М. Ислюков депутат.

Кун йĕркинче—РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановлени пирки тунă доклада сӳтсе явасси.

Прениre сăмах тухса каланă: М. Н. Харитонов юлташ (Улатăр хула Совет исполкомĕн председателĕ), И. О. Моздов депутат (Елчĕк районĕ, Аш Талпа округĕ), Е. В. Дмитренко депутат (Шупашкар хули, Канашски округĕ), С. М. Синицын юлташ (Канаш хула Совет исполкомĕн председателĕ), С. П. Никитин депутат (Шупашкар районĕ, Толик Хураскă округĕ), К. С. Соловьев юлташ (Канаш райсовет исполкомĕн председателĕ), П. В. Тощев депутат (Пăрачкав районĕ, Хуракасси округĕ), Н. Я. Яковлев депутат (Сĕнтĕр районĕ, Юнка округĕ), СССР Верховнăй Совет депутачĕ В. Г. Ефимова (Чăваш АССР Сывлăх министрĕ), П. Г. Григорьев депутат (Шупашкар районĕ, Сĕнтĕр округĕ), А. И. Воронцова юлташ (Чăваш АССР Социальнăй обеспечени министрĕ), О. А. Ермакова депутат (Иштек районĕ, Иштек-Покровски округĕ), Н. И. Захаров депутат (Етĕрне районĕ, Чалтай округĕ), Т. А. Ахазов депутат (Вăрнар районĕ, Ямаш округĕ), Л. А. Александрова депутат (Çĕмĕрле районĕ, Хутар округĕ), Ф. А. Кочергина юлташ (Етĕрне райсовет исполкомĕн председателĕ), М. Г. Арзамасов депутат (Çĕрпӳ районĕ, Тавăшкасси округĕ), Г. И. Савинов юлташ (Первомай райсовет исполкомĕн председателĕ), М. А. Андреева депутат (Çĕмĕрле хули, Октябрьски округĕ), В. А. Малинин юлташ (РСФСР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ).

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ докладчика—Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ И. А. Афанасьев депутат юлашкичен [illegible]

РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановлени пирки тунă доклад тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ пурте пĕр сасăпа [illegible] постановлени йышăннă.

Урăх Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ кун йĕркинчи тепĕр ыйтăва — Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă [illegible]

Ку ыйтупа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ Д. А. Матвеев депутат [illegible]

[illegible]

Çакăнпа Верховнăй Совет ларăвĕ [illegible] сесси хупăнчĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

ШУПАШКАРТИ ХУДОЖЕСТВО УЧИЛИЩИН ПРЕПОДАВАТЕЛЬНЕ Ф. Л. ЛАВРЕНТЬЕВА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Çуралнăранпа çитмĕл çул тултарнă тата ĕçлеме тытăннăранпа хĕрĕх çул çитнĕ май, Шупашкарти художество училищин преподавательне Федор Лаврентьевич Лаврентьева Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăлас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Д. МИТЬКОВ.
Шупашкар хули, 1953 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ.

Парти пурнăçĕн хроники

КИРОВ. Кунта парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен библиотекисен заведующийĕсен семинарĕ вĕçленнĕ. Вĕсене КПСС обкомĕ пухнă. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине пропагандăламалли меслетсемпе формăсем çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явнă.

• • •

СЫКТЫВКАР. Коми АССР-ĕнчи МТС парторганизацийĕсен секретарĕсен кунăлăх семинарĕ [illegible]. Унта вĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем çинчен лекцисем, кайран партипе-организаци тата партипе-политика ĕçĕн практики çинчен докладсем итленĕ. МТС-сенчи парторганизаци секретарĕсем Сыктывдинск районĕнчи «[illegible]» колхоза пынă, унта выльăх-чĕрлĕх фермисене механизацилени [illegible].

(ТАСС).

РСФСР-ти вырăнти тата топливо промышленноçĕнчи работниксен активĕн канашлăвĕ

Декабрĕн 10-мĕшĕнче Мускавра РСФСР-ти вырăнти тата топливо промышленноçĕнчи работниксен активĕн канашлăвĕ уçăлнă. Ăна халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерес тата вĕсен пахалăхне лайăхлатас ыйтусем [illegible]. Канашлура РСФСР Вырăнти тата топливо промышленноçĕн министрĕ [illegible] юлташ доклад туса панă. Вăл çапла пĕлтерчĕ: 11 уйăх хушшинче [illegible] çулхи çак тапхăрпа танлаштарсан, халăх валли 1,5 миллиард тенкĕлĕх ытларах тавар туса хатĕрленĕ. [illegible] (ТАСС).

Сахăр туса кăлармалли çулталăкри плана тултарнă

ВИННИЦА, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

Çĕнĕ сахăр завочĕ

МИНСК (Рамнă облаçĕ), (ТАСС). Декабрĕн 11-мĕшĕнче [illegible]

«Агитатор блокночĕ» черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн [illegible] «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 23-мĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ. [illegible]

КПСС ЧĂВАШ ОБКОМĔН VIII-мĕш ПЛЕНУМĔ

КПСС Чăваш обкомĕн черетлĕ VIII-мĕш пленумĕ КПСС обкомĕн секретарĕ Н. А. Шманов юлташ облаçри парторганизацире коммунистсене учета илес тата парти хуçалăхне тытса пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтересси çинчен тунă доклада сӳтсе явре. Ку ыйту тăрăх КПСС обкомĕн пленумĕнче КПСС райкомĕсен секретарĕсем—Родионов юлташ (Комсомольски), Иванов юлташ (Шăмăршă), Алексеев юлташ (Елчĕк), Тимофеев юлташ (Чкаловски), партин Канаш хула комитечĕн секретарĕ Новиков юлташ, КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Семенов юлташ тата парти, профсоюз тата комсомол органĕсен пайĕн заведующийĕ Талдыкин юлташ тухса калаçрĕç.

Иккĕмĕш ыйтупа—1954 çулхи çуракине хатĕрленсе ирттерес енĕпе облаçри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председатель заместителĕ И. В. Зайкин юлташ доклад турĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем пирĕн çĕршывра ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене хăвăрттăн вăйлатас ĕçре пысăк выран йышăнса тăнине палăртса, Зайкин юлташ çак постановление пурнăçа кĕртес ĕç пирĕн республикăра мĕнле пыни çинчен, 1953 ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсен итогĕсем çинчен каласа пачĕ.

КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе хавхаланса, колхозниксемпе МТС механизаторĕсем 1953 çулхи çуракине ăнăçлă ирттерчĕç. Государствăна тырă памалли плана республика срокчен тултарчĕ. Государствăна çĕрулми, пахча çимĕç, йĕтĕн-кантăр вăрри, нумай çул ӳсекен курăк вăрри, хăмла, утă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне сурăхсем, сыснасем, лашасем тата кайăк-кĕшĕк енĕпе тултарнă. Колхозсемпе колхозниксен натурăпа илекен тупăшĕ ӳсрĕ. Пĕрчĕллĕ тырăсем, çĕрулми тата ытти культурăсен вăрлăхĕ ытларах хатĕрленĕ. Республикăри МТС-сем çĕнĕ тракторсемпе тата ялхуçалăх машинисемпе пуянланчĕç. Тракторпа тăвакан ĕçсен пысăкăшĕ чылай ӳсрĕ.

Çав вăхăтрах ялхуçалăхне аталантарас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Çакă вăл чи малтан обком бюровĕне Министрсен Совечĕн, парти райкомĕсемпе райисполкомсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнинчен килет. Вĕсем партин XIX-мĕш съезчĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене çителĕксĕр пурнăçлаççĕ. Колхозсене организаципе хуçалăх енĕпе тĕреклетес тĕлĕшпе Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствипе машина-трактор станцисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. МТС техникипе усă курас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 13 МТС кăна тултарнă. Пĕр МТС та мĕнпур ĕçсем енĕпе плана тултарни пулман.

Парти обкомĕ, Министрсен Совечĕ, нумай райкомсемпе райисполкомсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлассине пачах çителĕксĕр организациленĕ. МТС-сен ĕçне лайăхлатас, вĕсен колхоз производствинчи рольне ӳстерес тĕлĕшпе тăракан ыйтусене вăраххăн татса параççĕ. Республикăри парти организацийĕнче Пленум решенийĕсем çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе партилле-политикăлла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

МТС-сенче ĕçлеме промышленность предприятийĕсемпе халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенчен агрономсем, зоотехниксем, инженерсемпе техниксем ярасси çинчен СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени çителĕксĕр пурнăçланать. Республикăри кая юлнă нумай колхозсенче ялхуçалăх специалисчĕсем çитмеççĕ, чылай МТС-сенче главнăй инженерсемпе мастерскойĕсен заведующийĕсем пулса ĕçлĕ тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухман çынсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçсене пурнăçлама пултараймаççĕ.

1953 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш республикинчи колхозсемпе МТС-сенче ĕçлеме 1.006 специалист янă: Ялхуçалăх министерствинчен — 27 специалист, районти ялхуçалăх управленисенчен — 781 çын, промышленность предприятийĕсемпе ытти организацисенчен — 83 çын. Пирĕн республикăри МТС-сене ĕçлеме Горький облаçĕнчен 68 инженер тата техник килмелле. Вĕсенчен [illegible] çын килсе çитнĕ те ĕнтĕ.

Докладчик МТС-семпе колхозсене ĕçлеме специалистсем уйăрса ярас ĕç çине ачăшлăн пăхни çинчен калакан фактсем илсе кăтартать. Хăшпĕр специалистсем тĕрĕссипе илсен çаплах район центрĕсенче пурăнаççĕ. Квалификациллĕрех агрономсемпе зоотехниксене пуринчен ытла район центрĕсен çывăхĕнчи колхозсене ĕçлеме яраççĕ. Уйрăм МТС-сенче экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăртарах колхозсене час-часах сахал опытлă специалистсене уйăрса яраççĕ.

Колхозсене ĕçлеме янă специалистсене чылайăшне вăхăтра хваттер параççĕ, [illegible]

Нумай МТС-сем, сăмахран, Ишлей МТС-ĕ, [illegible]

[illegible]

унăн председательне Статуев юлташа критиклет. Çĕмĕрле районĕ чылай ĕçсем енĕпе хăйĕнпе юнаштан Вăрнар районĕнчен юлса пырать. Çакă вăл, тет докладчик, райкомпа райисполком МТС-а тата колхозсене çителĕксĕр ертсе пынинчен килет.

Муркаш МТС-ĕ специалистсене тата хăшпĕр колхозсен председателĕсене хутшăнтарса, парти райкомĕпе райисполком пулăшнипе, КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановление колхозсенче пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе практикăлла мероприятисем палăртать. Малашне ĕçлеме плансем тăвасси питех те кирлĕ ĕç. Çавăн пек плансем çитес вăхăтра кашни МТС-ра тата кашни колхозра туса хатĕрлес пулать.

— Пирĕн ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес пулать,—тет Зайкин юлташ.—КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисене хăвăртрах пурнăçлас тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсене палăртса хурас пулать. Çапла тунипе колхозсенче, совхозсенче, районсенче ялхуçалăхĕ кая юлнине пĕтерсе мĕнпур ялхуçалăх отраслĕсене малта пыракансен шайне çити хăпартмалла.

Ялхуçалăхне хăвăрттăн вăйлатмалли задачăсене татса парас ĕçре ака ĕçĕсене кĕске срокра тата лайăх туса ирттерни пысăк выран йышăнса тăрать.

1954 çулхи план тăрăх çĕрулми, пахча çимĕç, техникăлла культурăсем, уйрăмах нумай çул ӳсекен курăксем акса тăвассине тата мĕнпур культурăсен тухăçлăхне ӳстерме палăртнă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилессине чылай ӳстермелле, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕпе ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай хăпартмалла.

Ялхуçалăхне вăйлатас ĕçре МТС-сем тракторсемпе туса ирттерекен ĕçсем пысăк выран йышăнса тăраççĕ. Çитес çул тракторсемпе тумалли ĕçсен пысăкăшĕ чылай ӳсет. Нумай ĕçсене (çĕртме сухи тăвас, курăк вăррисем пухса кĕртес тата ытти ĕçсене) машина-трактор станцийĕсен механизацилесе çитермелле.

Выльăх апачĕсен запасне тăвас тĕлĕшпе тымарçимĕç акса тăвас ĕçе ӳстермелле пулать. Çĕрулми, пахча çимĕç, техникăлла культурăсем акса тăвасси чылай ӳсет. Уйрăммăн илсен кантăр акса тăвакан çĕр лаптăкĕ 1953 çулхипе танлаштарсан 25 процент патне ӳсмелле.

Пĕрчĕллĕ культурăсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Плнпа уй-хире удобренисем кăларас, йӳсĕк тăпрасене известь парса лайăхлатас, тăпрара нӳрĕ ытларах тытса юлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртнă.

Малалла докладчик трактор паркне çитес çураки валли вăхăтра тата кăтартуллă хатĕрлесе çитерме кирли çинчен калать. Çакă вăл мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх срокçенче тата пысăк пахалăхпа ирттерме кирлĕ условипе пулса тăрать.

Кăçал тракторсемпе ялхуçалăх машинисене лайăх юсама паха условисем туса панă. Механизаторсен ялан ĕçлекен кадрĕсене хатĕрлени тата вĕсене ĕçшĕн çĕнĕ йĕркепе тӳлемелле туни пысăк выран йышăнса тăрать.

Чылай МТС-сенче, сăмахран, Чкаловски, Парачкав, Йĕпреç тата ытти хăшпĕр МТС-сенче кĕркуннене хĕллехи юсав ĕçĕсене пĕтĕм ответлăхпа туйса тытăннă. Мастерскойĕсене, общежитисене тата ытти суртсене юсаса çитернĕ. Оборудование йĕркене кĕртнĕ. Вăхăтра вутă, кăмрăк кӳрсе килнĕ. Тракторсене юсас ĕçе узловой меслетпе организациленĕ.

Анчах та чылай МТС-сенче çакăн пек условисем туса çитермен-ха. Тракторсене юсас ĕç кăçал иртнĕ çулхинчен начартарах пырать. 13 МТС кăна тракторсене график тăрăх юсаса кăларать. Юсав ĕçĕсене Куславкка, Çĕмĕрле, Муркаш, Калинино, Первомайски, Сиява, Етĕрне МТС-ĕсенче питех те çителĕксĕр организациленĕ. Ялхуçалăх машинисене юсасси çителĕксĕр пырать.

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви машина-трактор паркне юсас ĕçе çителĕксĕр ертсе пырать. 9 МТС-ра тракторсем юсас ĕçе ĕлĕкхи бригада меслечĕпе туса пыраççĕ. Малта пыракан МТС-сен опытне ĕçе начар кĕртеççĕ. Час-часах юсав ĕçĕсен пахалăхĕ начар пулать.

Чылай çĕрте машинăсем юсакан механизаторсем валли паха условисем туса паман. Çавнашкал йĕркепе темĕншĕн тата профсоюз, совет, парти органĕсем те килĕшсе тăраççĕ. Çак ĕçре çитес çывăх вăхăтра тивĕçлĕ йĕрке тумалла.

Республикăри снабжени организацийĕсем — Главмашсбытăн республикăри кантурĕ (управляющийĕ Кривоногов юлташ) тата Ялхуçалăх снабжени управленийĕ (управлени начальникĕ Костин юлташ) халиччени пекех начар ĕçлеççĕ. Вĕсен машинисене юсама кирлĕ запаслă пайсемпе материалсем вăхăтра парса тăмалла.

МТС-сем валли кадрсем çителĕклĕ хатĕрлемелле, колхозниксене виçĕ çуллăх агрозоотехника курсĕсенче вĕрентсе хатĕрлессине лайăхлатмалла.

Çуракине хатĕрленес ĕçре пур колхозсенче те мĕнпур культурăсем тăрăх лайăх вăрлăх хатĕрлесе çитерни пысăк выран йышăнса тăрать. Вăрлăхсăх пĕрчĕллĕ тырăсен тата пăрçа йышши культурăсен (кукăрăр пусне) хывмалли плана колхозсем 100,8 процент тултарнă. Вăрлăх хывас тĕлĕшпе уйрăмах Улатăр, Елчĕк, Вăрнар, Йĕпреç, Комсомольски, Чкаловски, Вăрмар районĕсенчи колхозсем [illegible] ĕçлеççĕ. Анчах нумай колхозсенче [illegible]. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Советски, [illegible] районĕсенчи колхозсем начар [illegible].

Нумай колхозсен пĕрчĕллĕ тырăсемпе пăрçа йышши культурăсен вăрлăхĕсем çителĕклĕ мар. Техникăлла культурăсен вăрлăхĕ тĕлĕшпе ĕçсем уйрăмах начар тăраççĕ. Пĕр çул тата нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕ çитмест.

Нумай колхозсенче çĕрулми вăрлăхĕ çитмест. Ку тĕлĕшпе ĕçсем уйрăмах Чкаловски, Елчĕк, Шăмăршă, Первомайски тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсенче начар тăраççĕ. Асăннă районсенчи колхозсенче çĕрулми вăрлăхĕ хывмалли плана пурĕ те 57—66 процент кăна тултарнă. Нумай юлташсем ку тăрăхчченех çакна шута илмеççĕ: 1954 çулта çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартма çĕрулми нумай кирлĕ пулать, кашни гектар пуçне сахалтан та 30 центнер пысăк пахалăхлă çĕрулми вăрлăхĕ кирлĕ.

Вăрлăх улăштарса илес, вăрлăхсене акма юрăхлă кондицие çитерес ĕçсем те çаплах çителĕксĕр пыраççĕ-ха.

— Фактсем çакăн çинчен калаççĕ, — тет докладчик, — нумай колхозсен руководителĕсемпе МТС-сен директорĕсем вăрлăх хывас ĕçе ытла та вăраххăн туса пыраççĕ. Парти райкомĕсемпе райисполкомсем ку тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле тăнине тивĕçлипе тĕрĕслесе тăрас ĕçе организацилемен, тĕрĕссипе ку ĕç хăй юхăмне пулса пырать. Çавнашкал юрăхсăр йĕркене пĕтерес пулать.

Малалла Зайкин юлташ çĕрулмипе пахча çимĕç туса илес ыйтусем çинче чарăнса тăрать. Çĕрулми тухăçлăхне ӳстерес задачăна ăнăçлă татса парас шутпа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обком бюровĕ çĕрулмине тăваткал тĕмĕн кăна лартма кирлĕ, тесе шутлаççĕ. Пирĕн условисенче ку ĕçе ятарласа тунă машинăсемпе мар, пуринчен ытла плугсемпе туса ирттермелле пулать. Çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартасси вăл пысăк ĕç. Çак ĕçе мĕнпур агрономсене, МТС-семпе колхозсенчи механизаторсене, колхозниксене вĕрентес пулать.

Пахча çимĕç культурисем туса илес, парниксемпе теплицăсем тăвас ĕç çине тимлĕн пăхмалла. Эпир кăçал пахча çимĕç лартса тумалли плана тултараймарăмăр. Çитес çул пахча çимĕç акмалли тата унăн тухăçлăхне ӳстермелли плана мĕнпур колхозсем тăрăх тултармалла тăвас пулать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ вырăнти удобренисем (тислĕк, торф, тислĕк шĕвекĕ, тĕрлĕ компостсем тата ыттисем) хатĕрлессине чылай ӳстерме кирли çине кăтартса пачĕ. Анчах та, тет Зайкин юлташ, КПСС Улатăр, Куславкка, Кувакино, Шăмăршă, Çĕмĕрле райкомĕсен секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсем тислĕк тата торф хатĕрлемелли, вĕсене уя кăлармалли плана тултарман колхозсен председателĕсемпе килĕшсе пурăнаççĕ. Çак районсем 1953 çулта тислĕк кăлармалли плана пурĕ те 30—54 процент кăна тултарнă.

Вăрнар, Муркаш, Чурачăк, Шăхасан райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем тăвакан ĕçсене ырлама тивĕç. Асăннă районсенчи колхозсем тислĕк турттарса кăлармалли плана чылай ирттерсе тултарнă. Халĕ вĕсем çак паха удобрение ытларах пухса уя кăларма тăрăшаççĕ.

Вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес, вĕсене тĕрĕс сыхласа усрас тата вĕсемпе усă курас ĕç çине, çавăн пекех минераллă удобренисемпе усă курас ĕç çине пуçламăш парторганизацисен, ял Совечĕсен, КПСС райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен куллен тимлĕн пăхас пулать. Удобренисене хакламаннине тата вĕсене хуçасăрла тыткаланине пĕтерес тесен, тислĕк усрамалли вырăнсем тăвасси çине тимлĕн пăхас пулать, тислĕке уй-хире вăхăтра турттарса кăларас пулать. Кашни колхозра тислĕк турттарма ялан ĕçлекен çынсем, туртăм вăйĕ тата транспорт уйăрса парас пулать. Халĕ, çураки ĕçĕсене хатĕрленнĕ тапхăрта, хăйсен çĕрĕсем çинче торф тата известь пур колхозсен вĕсене хатĕрлес ĕçе анлăн организацилес пулать. Ку ĕçре колхозсене МТС-сен пысăк пулăшу памалла.

Ялхуçалăх снабжени склачĕсенче тата чугун çул станцисенче выртакан минераллă удобренисене хăвăртрах турттарса кăларас ĕçе организацилемелле. Вĕсене колхозсенче лайăх пăхса усрамалла тата вĕсемпе тĕрĕс усă курмалла.

Лашасене пăхас ĕçе пур майсемпе те лайăхлатмалла, вĕсене лайăх тăрантса усрамалла, лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтермелле.

Малалла Зайкин юлташ обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлеме çирĕп никĕс тума кирли çинчен калать.

Юлашкинчен докладчик çакна кăтартса парать: çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе ирттерме пирĕн республикăри колхозсемпе совхозсен пур майсем те пур. Ятарлă партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсен шайне хăпартмалла, колхозсенчи, МТС-сенчи, совхозсенчи парторганизацисене ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле, парторганизацисен пĕлтерĕшне ӳстермелле, колхозсенчи, МТС-сенчи, совхозсенчи ĕçсемшĕн вĕсен ответлăхне хăпартмалла.

КПСС Центральнăй Комитечĕн пленумĕ йышăннă решенийĕсем çинчен мĕнпур колхозниксене, МТС-семпе совхозсенчи рабочисене ăнлантарса парас ĕçе лайăх организацилесе, КПСС Центральнăй Комитечĕ ялхуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн, МТС-сене, колхозсене тата совхозсене çуракине лайăх хатĕрлессишĕн, [illegible] 1954 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне [illegible] анлăн сарса ямалла.

* * *

Доклад хыççăн КПСС Куславкка райкомĕн секретарĕ Хромов юлташ сăмах каларĕ.

Районти ялхуçалăхĕ япăхса çитнине палăртса, Хромов юлташ района парти обкомĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ енчен конкретлă пулăшу пама кирли çинчен калать.

Пирĕн МТС-ăн, тет Хромов юлташ, производствăпа техника никĕсĕ ытла та япăх. Электростанци, рабочисем валли общежитисем çук. Мастерской ытла та пĕчĕккĕ, унта пурĕ те пĕр трактор кăна кĕме пултарать. Машина-трактор паркне юсама кирлĕ пек условисем туса парасса тата пирĕн МТС-ра 1954 çулта типовăй мастерской, электростанци, общежитисем тума палăртĕç тесе шанăччĕ эпир. Анчах ун пек пулмарĕ.

Республикăри Ялхуçалăх министерствин ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх, тет Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕн заместителĕ Осанов юлташ, эпир ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçе ытла та вăраххăн тата хăюсăр çĕнетсе пынинчен килет. Нумай машина-трактор станцисен директорĕсем колхоз производствин мĕнпур отраслĕсене ертсе пырассишĕн, ялхуçалăхне аталантармалли государство планне мĕнпур колхозсем тăрăх тултарассишĕн пĕтĕм ответлăха туйса илмен-ха.

Малалла вăл ялхуçалăх специалисчĕсене ялта ĕçлеме янă чухне тунă йăнăшсем çинчен калать. Ялхуçалăх министерствипе унăн районсенчи управленисен аппарачĕсенчен ялта ĕçлеме кайнă лайăх специалистсем пуринчен ытларах экономика тĕлĕшĕнчен тĕреклĕрех тата хуласемпе районсен центрĕсене çывăхрах колхозсене вырнаçнă. Çакă вăл пирĕн парти кая юлнă колхозсене опытлă специалистсем яма кирли çинчен кăтартса панине хытăн пăсни пулать.

Нумай МТС-сен руководителĕсем колхозсене агрономсемпе зоотехниксем ярас ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ, вĕсене ĕçре кирлĕ пулăшу памаççĕ, вĕсем валли пурăнма лайăх услови туса пама сахал тăрăшаççĕ. Çавăнпа усă курса, специалистсен пĕр пайĕ çаплах хуласенче тата район центрĕсенче пурăнать. Çавăн пек, Пăрачкав МТС-ĕн агрономĕ Некрасова юлташ хăй ĕçлекен Сталин ячĕпе тăракан колхоза сайра хутра кăна пырса каять.

Çĕрулми лартса тăвас ыйтусем çинче чарăнса тăрса, Осанов юлташ 1954 çулта çĕрулми лартса тумалли çĕр лаптăкне выльăх апачĕ акса тумалли пусă çаврăнăшне пурнăçласа тата хура çĕртме пуçне çĕрулми лартса ӳстерме кирли çинчен калать.

Малалла вăл çитес çулхи суркуннерен пуçласа республикăри колхозсенче пуринче те çĕрулмине тăваткал тĕмĕн кăна лартма кирли çинчен калать. Шăхасан районĕнчи тата республикăри малта пыракан ытти колхозсен опычĕ çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартни пысăк усă панине кăтартрĕ.

Осанов юлташ пахча çимĕçсемпе улмаçырласем туса илес ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртса, çак ĕçе çирĕп тивĕçлипе тытăнма кирли çинчен калать. Халех чӳлмексем туса хатĕрлеме торф тата çĕрĕк тăпри кăларма, парниксем тума, матасем хатĕрлеме тытăнас пулать.

Социализмла ăмăртăва хутшăнса пирĕн МТС работникĕсем, тет Красноармейски МТС-ĕнчи пуçламăш парторганизаци секретарĕ Краснов юлташ, машина-трактор паркне çуракине хатĕрлес ĕçе хастарлăн тытăнчĕç. Вĕсем Конституци кунĕ тĕлне тракторсем юсамалли квартал планне тултарчĕç. Çак çитĕнĕве кадрсемпе çине тăрса ĕçленипе тунă. Парти организацийĕ пуçарнипе юсав ĕçĕсем пуçланас умĕн механизаторсем пурте социализмла обязательствăсем йышăнчĕç. Машинăсем юсас ĕç мĕнле пыни çинчен боевой листоксенче анлăн çутататпăр. Боевой листоксем вăхăтра тухса тăраççĕ. Хăйсен кану вăхăтне механизаторсем клубра ирттереççĕ. Кунта культурăллă канма пур условисем те туса панă.

Краснов юлташ Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствине вăл хăйĕн ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хушнă пек улăштарса çĕнетес тĕлĕшпе вăраххăн ĕçленĕшĕн критиклет. Министерство сентябрь уйăхĕнчех Петрова юлташа пирĕн МТС-ăн главнăй агрономĕ пулма çирĕплетрĕ, анчах вăл ку таранччен те çитсе те пирĕн патăрта пулса курман. Пирĕн пата министерство ярса пама пулнă инженерсемпе техниксем те килмен-ха.

Малалла Краснов юлташ Главмашсбытăн республикăри кантурĕ çаврăнăçусăр ĕçлени çинчен калать. Вăл МТС-сене кирлĕ запаслă пайсем вăхăтра памасть.

КПСС Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташ районти парти организацийĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсем çинчен калать. Икĕ уйăх хушшинче партипе совет активĕн вăйĕпе колхозниксемпе механизаторсем валли 220 лекци тата доклад вуласа панă. Хальхи вăхăтра 500 ытла агитатор КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ çинчен [illegible]

[illegible] чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатма мероприятисем хатĕрленĕ. Выльăхсем валли витесем çителĕклĕ тăвас шутпа районти нумай колхозсем выльăх витисене çулталăк тăршшĕпех туса пыраççĕ. Витесене типовăй проектсем тăрăх тăваççĕ. Кăçал колхозсем выльăх-чĕрлĕх валли апат ытларах хатĕрлерĕç. Çавсем пурте выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне чылай ӳстерме май параççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕ сентябрьти Пленумĕ кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçласси чи малтан кадрсене тĕрĕс суйласа илсе ĕçе пĕлсе вырнаçтарса тухнинчен килет. Хальхи вăхăтра 24 колхоз председателĕнчен çиччĕшĕ ялхуçалăх специалисчĕсем пулса тăраççĕ. Эпир выльăх-чĕрлĕх фермисенче тата уй-хир бригадисенче ĕçлеме 20 коммунист тата 35 комсомолец уйăртăмăр. Ку ĕç халĕ те малалла пырать.

Кузьмин юлташ республикăри Министрсен Совечĕпе парти обкомĕн ертсе пыракан работникĕсем Çĕмĕрле районĕнче сахал пулни çинчен калать. Эпĕ, тет вăл, пирĕн района Афанасьевпа Зайкин юлташсем пырса кайнине астумастăп. Вĕсем колхозсемпе ял Совечĕсен председателĕсене вырăнта пулса пулăшу памаççĕ.

Шупашкар райкомĕн секретарĕ Зайцев юлташ колхозсенче ĕçлеме ялхуçалăх специалисчĕсем суйласа илес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсем çинчен калать.

Малалла Зайцев юлташ çĕрулмипе пахча çимĕçсем туса илессине ӳстерес ыйтусем çинче чарăнса тăрать. Кăçал районти колхозсем гектар пуçне вăтам шутпа 130-шар центнер çĕрулми туса илнĕ. Çакă вăл иртнĕ çулхи тухăçран икĕ хут ытларах. Молотов ячĕпе тăракан колхоз кашни гектар пуçне 210-шар центнер çĕрулми туса илнĕ.

Шупашкар районĕн, хула çывăхĕнче пулнă пирки, çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле. Анчах Ялхуçалăх министерстви çак енĕпе урăхла шухăшлать пулмалла. Пире 1954 çул валли çĕрулми лартмалли плана кăштах пĕчĕклетсе пачĕç, кантăр акмалли плана вара ӳстернĕ.

КПСС обкомĕн бюровĕпе Министрсен Совечĕ йышăннă тăрăх, пирĕн районти тăватă колхозра столицăри промышленноçлă предприятисем пулăшнипе теплицăсем тума палăртнă. Хăшпĕр предприятисем çак ĕçре колхозсене начар пулăшаççĕ.

— Пирĕн ялхуçалăх артелĕн членĕсем,—тет Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз председателĕ Долгов юлташ,—КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлама конкретлă ĕçсем туса ирттерме палăртрĕç тата вĕсене хастарлă пурнăçласа пыраççĕ. Планпа паха йышши культурăсем акса тумалли çĕр лаптăкне, вĕсен тухăçлăхне ӳстерме тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли, çавăн пекех колхозниксен килĕсенчи выльăхсем валли те апат хатĕрлессине лайăхлатма палăртнă. Халĕ пирĕн колхозниксем уя тислĕк кăлараççĕ. Канаш хулинчен минераллă удобренисем кӳрсе килеççĕ. Вĕсене 200 тонна кӳрсе килнĕ те ĕнтĕ. Чӳлмексем тума торфпа çĕрĕк тăпри кирлĕ таранах хатĕрленĕ. Колхозниксем ĕçрен пушаннă вăхăтра агротехникăна, зоотехникăна тата политикăна вĕренеççĕ.

Пирĕн колхозниксем 1954 çулхи çуракине лайăх хатĕрленессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Культура министрĕн заместителĕ Трофимов юлташ хăйĕн сăмахĕнче ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем хушнă пек лайăхлатма кирли çинчен калать. Вăл çакна палăртать: Культура министерстви тата унăн вырăнсенчи органĕсен ĕçĕ ялти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем колхозлă ял ĕçченĕсем кăларса тăратакан пысăк ыйтусене тивĕçтереймест-ха. Лекцилĕ пропаганда ĕçне начар йĕркеленĕ, ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем сахал пулаççĕ. Чылай чухне лекцисене итлекенсен пĕлĕвне шута илмесĕр ирттереççĕ. Районсенче клубсенчен çурри ытла вут-шанкă çук пирки питĕрĕнсе тăрать. Ялта кино кăтартасси çителĕксĕр пулса пырать. КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ халăха кино кăтартас ĕç çинчен сахал шухăшлать, çитменлĕхсене кăтартса панине кăна сырлахать.

Çĕмĕрле МТС-ĕнчи пуçламăш парторганизаци секретарĕ Ефимов юлташ Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствипе Главмашсбытăн республикăри кантурĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклет.

— Пирĕн МТС руководстванне, — тет вăл, — çĕнĕ çынсем килчĕç, анчах министерство вĕсене начар пулăшать. 1954 çулта Çĕмĕрле МТС-не строительство валли нумай укçа-тенкĕ пама палăртнă. Типовăй мастерской, сарайсем тата ытти çурт-йĕрсем тумалла. Пирĕн условисенче çав суртсен никĕсĕсене хĕлле хывма лайăхрах пулмалла, [illegible]. Анчах Ялхуçалăх министерствин работникĕсем строительство валли проектпа техникăлла документсене вăраххăн хатĕрлеççĕ.

Чăваш АССР Сывлăх министрĕ Ефимова юлташ ялти халăха медицина енĕпе пулăшу парас тата физкультурăпа спорта аталантарас ыйтусем çинчен чарăнса тăрать.

[illegible]

хушать. Колхозсенче [illegible] ĕçсем туса ирттерес пулать.

— Канашри моторсем юсакан заводăн йĕркеллĕ ĕçлеме кирлĕ условисем çук,—тет завод директорĕ Училихин юлташ.—анчах Ялхуçалăх министерстви те, Министрсен Совечĕ те тата КПСС обкомĕ те ăна тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ. Завода реконструкцилесси çинчен министерствăра тахçантанпах калаççĕ, анчах ĕç вырăнтан хускалмасть. Завод çине тивĕçлипе пăхманнине унăн ĕçĕ çинчен Зайкин юлташăн докладĕнче асăнманни те лайăх кăтартса парать. Зайкин юлташ нумаях пулмасть пирĕн патăрта пулчĕ, уншăн заводра мĕн кирлисем паллă ĕнтĕ.

Канашри вагонсем юсакан завод пире электроэнерги тата кислород, Главмашсбытăн республикăри кантурĕ — металсем питĕ çителĕксĕр парса тăраççĕ.

Вăрмар МТС директорĕ Арзамасов юлташ çакна палăртать: снабжени организацийĕсем хăйсен ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хушнă пек улăхлатса çĕнетмен. Ман шутпа, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Главмашсбыт кантурĕн руководителĕсен ответлăхне ӳстерме вăхăт ĕнтĕ.

Арзамасов юлташ, тракторсене юсас ĕçри юрăхсăр меслетсем çинчен каласа, тракторсене çулталăк тăршшĕпех юсамалла, вĕсемпе çуллахи вăхăтра кăна мар, хĕллехи вăхăтра та усă курмалла, тесе шутлать.

Малалла вăл хăшпĕр МТС-сем [illegible] кăтартса парать. [illegible] Колхозпа МТС хушшинчи договор [illegible] пулса тăрать, çавăнпа та ăна икĕ енĕн те [illegible] пурнăçлас [illegible].

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствинче [illegible] Захаров юлташ [illegible] кантăр лартса тăвас ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртать, колхоз производствин пысăк тупăш паракан техникăлла культурăсем акмалли çĕр лаптăкне ӳстермелли задачăсем çинче чарăнса тăрать.

Ялхуçалăх министерствине критиклесе [illegible] тĕрĕс, тесе шутласа, Захаров юлташ çакна палăртать: парти райкомĕсемпе райисполкомсем колхозсене ĕçлеме янă ялхуçалăх специалисчĕсем [illegible] район центрĕсенче [illegible] пурăннине, çав хушарах колхозсене сайра хутра кăна пулнине килĕшсе пурăнаççĕ. Çавăн пек йĕркене [illegible] вăхăт ĕнтĕ.

Халĕ пирĕн пата Горький облаçĕнчен 44 инженерпа техник килчĕç. Пĕр кунлăх семинар ирттерне хыççăн эпир вĕсене МТС-сене ятамăр. МТС директорĕсем вĕсем валли лайăх условисем туса памалла. Анчах хăшпĕр МТС-сенче çав условисем туман. Кунта парти райкомĕсемпе райисполкомсем енчен пысăк пулăшу кирлĕ.

Юлашкинчен КПСС обкомĕн секретарĕ Ислюков юлташ тухса каларĕ. Вăл парти обкомĕн членĕсен çуракине хатĕрленме май колхозсенче организаторла тата политикăлла ĕçе вăйлатма кирли çине тата колхозниксемпе механизаторсен пысăк йышне ялхуçалăхне малалла çĕклентерессишĕн кĕрешме мобилизацилесси çине тимлĕ пăхма кирлине кăтартса пачĕ.

Пирĕн,—тет Ислюков юлташ,—ялти массăлла-политикăлла ĕçе [illegible] требованисен шайĕ таран çĕклеме вăйсем те, майсем те çителĕклĕ. Шел пулсан та, çав вăйсемпе питĕ çителĕксĕр усă кураççĕ. Парти обкомĕпе райкомсен политикăлла ĕçе пĕрмаях вăйлатса пымалла, çак ĕçе ертсе пыракан работниксене, совет интеллигенцийĕн, агитаторсен пысăк йышне хутшăнтармалла. Массăсене идейăлла-политикăлла влияни паракан мĕнпур учрежденисемпе — клубсемпе, библиотекăсемпе, театрсемпе, кинопа тата радиопа тулли усă курмалла тăвас пулать.

Ислюков юлташ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине пропагандăлас, ăна пурнăçлама колхозлă ял ĕçченĕсене мобилизацилес ĕç [illegible] пысăк выран йышăнса тăнине палăртать.

Пирĕн республикăри тата районсенчи хаçатсем [illegible], палăртать Ислюков юлташ, хăйсен ĕçне партин çĕнĕ требованийĕсем майлă улăхлатса çĕнетмен. Вĕсем колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене, пуринчен малтан, колхоз председателĕсене, çавăн пекех ялхуçалăх специалисчĕсене суйласа илесси, воспитани парасси çинчен сахал çыраççĕ. [illegible] Республикăри колхозсемпе МТС-сенче çуракине хатĕрленес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур, анчах хаçатсем çав çитменлĕхсене критикăламаççĕ. Хаçат страницисенче МТС-сен ĕçĕсем, вĕсене механизаторсен кадрĕсемпе çирĕплетес ыйтусем тивĕçлĕ вырăн йышăнмаççĕ. [illegible]

[illegible]

Малта пыракансен опычĕ

Кантăр—пысăк тупăшлă техникăлла культура

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз нумай çул хушши ĕнтĕ кантăр акса тăвать. Артель членĕсем тухăçлă кантăр туса илес ĕçре пахa опыт пухрĕç. 1940 çулта 9 гектар кантăр акнă пулсан, 1953 çулта вара кантăр акмалли çĕр лаптăкне 60 гектара çитерне. Кантăр акмалли çĕр лаптăкне пысăклатса пынипе пĕрле колхозниксем кантăр тухăçлăхне ÿстерсе пыма задача лартнă.

Çак задачăна колхозниксем тимлĕн пурнăçласа пыраççĕ. 1940 çулта гектартан 3,2 центнер кантăр вăрри, 1,4 центнер сÿс туса илнĕ пулсан, 1947 çулта—7,4 центнер вăрă, 3,6 центнер сÿс, 1952 çулта—8,5 центнер вăрă, 5,6 центнер сÿс туса илнĕ. Кăçал кантăр тухăçлăхĕ тата пысăкрах.

Колхоз государствăна кашни çулах лайăх кантăр вăррипе сÿс парать. Пирĕн кантăр сÿсне яланах 8—9-мĕш номерсемпе илеççĕ. Пахa продукци парса колхоз вуншар пин тенкĕ тупăш илет. Кантăртан илекен пĕтĕм тупăшпа пĕрлех, кантăр акса тавакан кашни гектар çĕр лаптăкĕнчен илекен тупăш та ÿсет.

Тухăçлă кантăр туса илме нумай ĕçлемелле. Тĕштырă туса илес ĕçпе танлаштарсан, кантăр тăвас ĕçре 7—8 хут ытларах ĕçкунĕ расходланать. Пирĕн кантăр туса илес ĕçре расходланакан кашни ĕçкунĕ пуçне тивекен тупăш та ÿсех пырать. 1940 çулта кантăр туса илме расходланă кашни ĕçкунĕ пуçне 2 тенкĕ те 30 пус кăна тивнĕ пулсан, 1947 çулта—9 тенкĕ те 64 пус, 1950 çулта—22 тенкĕ те 47 пус, 1952 çулта 44 тенкĕ те 53 пус тивнĕ. Кантăр туса илес ĕçе механизациленĕ ĕç тухăçлăхне ÿстермелле,—çапла туни ĕçкунĕ пуçне тивекен тупăша малалла ÿстерме май парать.

Пиртен час-часах мĕнле майпа тухăçлă кантăр туса илни çинчен ыйтаççĕ. Калас пулать, ĕç ăнăçлăхĕ кантăр туса илес ĕçри агротехника шайне ÿстерсе пынинчен килет. Эпир кантăра вылăх апачĕ туса илмелли пусă çаврăнăшне акатпăр. Кантăра нÿрĕ нумай кирлĕ. Анайлăмрах участоксене — Аслă Пăла шывĕн улăхне акатпăр. Органикăлла тата минераллă удобренисемпе усă курасси çине тимлĕн пăхатпăр. Çĕртме сухи тунă чухне кантăр акмалли вырăна кашни гектар çине 50—60 тонна çĕрнĕ тислĕк, 3—4 центнер суперфосфат тата 2 центнер хлорлă кали сапатпăр. Акас умĕн культиваци туса кашни гектар пуçне 2-шер центнер аммиак селитри сапатпăр. Акнă чухне кантăр вăрлăхне кашни гектар пуçне 50 килограмм, пĕрчĕллĕ суперфосфатпа хутăштарса акатпăр.

Кантăр шăтса тухсан, пуç кăлариччен, ăна кашни гектар çине 1 центнер суперфосфат, 0,5 центнер хлорлă кали тата 3 центнер çĕрнĕ тислĕк хутăштарса апат паратпăр. Кантăр акмалли çĕр лаптăкне кĕркуннех хатĕрлеме тытăнатпăр: ăна 30 сантиметр тарăнăш сухаласа çĕртме туса хăваратпăр. Çуркунне сÿрелетпĕр, акас умĕн культиваци тăватпăр. Çĕр пиççе çитнĕ май 2—3 кун хушшинче акса пĕтеретпĕр.

Эпир среднерусски сортлă кантăр акатпăр. Кантăр лайăх шăтса тухтăр тесен, пахa вăрлăх акмалла. Çавăнпа та вăрлăха тĕплĕн тасатса кондицие лартатпăр, кашни çулах пĕрремĕш класлă шултра вăрлăх акса хăваратпăр. Пĕр гектар çине 6 миллион пĕрчĕ, урăхла каласан, 135—150 килограмм кантăр вăрри акатпăр.

Кантăр калчи пите кар шăтса тухать, сумкурăкĕ нихçан та пулмасть. Кантăр калăкра 4—5 сантиметр таран ÿсет. Пулса çитсен унăн çÿллĕшĕ 2 метртан кая мар пулать. Пусасем чечеке ларнă вăхăтра 3—4 хут искусственнăй майпа шăркалантаратпăр. Анлă ретпе акнă кантăра икĕ хутчен ретсен хушшине çемçететпĕр. Кантăра хурт-кăпшанкăсем сиен тăвасран куллен пăхса тăратпăр. Вĕсене эпир гексахлоран е кремнефтористăй натри сапса пĕтеретпĕр.

Кантăр татма пуçлахăн аялти пайĕнчи вăррисем пулса çитсен тытăнатпăр, 6—7 кун хушшинче пуçтарса кĕртетпĕр. Кантăр пучахĕ типсе пынă май, ăна çапма тытăнатпăр. Эпир кантăр çапас ĕçе механизациленĕ. Çапнă кантăра тирпейлесе капана хыватпăр. Кĕркунне тата çуркунне çумăр çунă чухне шыв ап кайтăр тесе кантăр капанĕсен тăррине улăмпа лайăх витсе хуратпăр. Хĕл касă хыççăн, май уйăхĕнче, шыв 8 градуса çити ăшăнсан кантăра шыва хутатпăр.

Колхозниксем кантăр вăррипе сÿс тухăçлăхне планпа пăхниинчен чылай ÿстерчĕç. Çакăншăн вĕсене ĕçшĕн хушса чылай укçа панă. 1952 çулта Деомидов юлташ ертсе пыракан бригада членĕсене ĕçшĕн хушса 20 пин тенкĕ укçа панă. Бригадăри уйрăм колхозниксем 600—800 тенкĕ укçа илчĕç. Ĕçшĕн хушса тÿлени колхозниксене тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Колхозниксем КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленине сÿтсе явса государствăна тата ытларах сÿс-кантăр туса пама обязательство илчĕç. Вĕсем çитес 2—3 çул хушшинче кантăр акакан çĕр лаптăкне 100 гектара çитерме, кантăртан 1,5—2 миллион тенкĕ тупăш илме пулчĕç.

Артель членĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн хастарлă кĕрешеççĕ. Колхозра суракине тĕплĕн хатĕрленессишĕн социализмла ăмăрту йĕйланса пырать. Халĕ колхозниксем хирте юр тытаççĕ, тислĕк хатĕрлеççĕ, минераллă удобренисем турттараççĕ.

Е. ВАСИЛЬЕВА,
колхоз агрономĕ.

Юлашки почтăран

„Капкăн кĕтесси“ районти хаçатсенче

Пирĕн пурнăçри, ĕçри, йăлари кивĕ хăпăхусене, мораль тĕлешĕнчен арçăлнă çынсене, бюрократсене, халăх пурлăхне çаратакансене, коммунизм тăвас ĕçе тĕрлĕ майсемпе чăрмантарма пăхакансене хирĕç кĕрешес ĕçре сатира çивĕч хĕçпăшал пулса тăрать. Çавна май «Коммунизм ялавĕ» хаçат «Капкăн страници» е «Капкăн кĕтесси» пичетлесе пыма пуçларĕ.

Шăхасан районĕнчи «Вăйлă тырпулшăн» хаçатра та декабрĕн 10-мĕшĕнче «Капкăн кĕтесси» йĕркеленĕ. Паллах, ырă пуçарăва йышанса пурнăçа кĕртни—лайăх ĕç. Анчах ăна редакци работникĕсем «Коммунизм ялавĕ» хаçатри пек пĕр евĕрлĕ, пĕр улăштармасăр туни вырнаçуллах мар. «Капкăн кĕтесси» çеç мар, ытти тĕрлĕ ят та пама пулать. Сăмахран, сатирăпа юмора «Пирĕн кулăш», «Юморпа сатира пайĕ», «Капкăн шăлнĕ», «Пирĕн сенĕк», «Пирĕн хĕскĕчĕ», «Кулăс килет» тата ытти темĕн тĕрлĕ ятсемпе йĕркелесе пичетлеме пулать.

Канаш районĕнчи «Коммунизмшăн» хаçат редакцийĕ те «Капкăн кĕтесси» йĕркелесе кăларнă, анчах хаçатра ÿкерчĕксем ытларах вырăн йышăннă, çитменнипе хăшпĕр ÿкерчĕксем кивĕ.

Районти хаçатсен сатирăпа юмор пайне çĕнĕ те тĕрлĕ формăсемпе йĕркелеме тăрăшмалла.

Макарон фабрикинче

Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисем хушшинче Шупашкарти макарон фабрика паллă вырăн йышăнать. Çак фабрикăра туса кăларакан макаронпа лапшана, вермишельпе ытти продуктсене хамăр республикăри ĕçсыннисем илеççĕ тата вĕсене республика тулашне те ăсатаççĕ.

А. Семеновăпа Г. Гусакина юлташсем ĕçре.

— Фабрика коллективĕн ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Партипе правительство апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ÿстерес тата пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă постановлени коллективăн пултарулăхне пуçарулăхне тата ытларах ÿстерчĕ.

Цех. Кунта таса, çутă. Алăкран кĕрсен, сулахай енче машинăсем. Вĕсен çывăхĕнче темиçе вагонетка тăрать. Шапшурă халатсем тăханнă работницăсем çак пысăк машина-прессем умĕнче васкавлă ĕçлеççĕ. Акă, пĕр вăтам пÿллĕ работница электричество рубильникне пусрĕ. Унччен те пулмарĕ, хăватлă машина кĕрлени илтĕнсе кайрĕ. Ку вăл макарон туса кăлармалли пресс. Ăна иртнĕ çулта çеç вырнаçтарса лартнă.

Пресс пĕр чарăнмасăр ĕçлет. Çÿлтен шуç тимĕртен тунă труба тарăх машина ăшне лайăх аласа тасатнă шурă çăнăх пырать, тепĕр çĕртен шыв юхса анать. Пресс барабанĕнче макарон тумалли чуста пулать.

. Прессовщица Марфа Тарасовна Тарасова çакăн пек икĕ пресса ĕçлеттерет. Вăл барабана çăнăх тата шыв пĕр тикĕс парса тăнине сăнать, ку ĕçе йĕркелет. Нитĕ каткăс ĕç: çăнăхпа шыв ытларах е сахалтарах пырса тăрсан, чуста ытлашши нÿрелет е хытать. Çапла вара макарон пахалăхĕ те чакать. Апла ан пултăр тесен, прессовщица ĕç йĕркине çирĕп пĕлни кирлĕ, пресa йĕркелемелли хатĕрсене сăнаса тăмалла. М. Тарасова çакна лайăх пĕлет. Вăл технологи процесне çирĕп пурнăçласа пыма тăрăшать. Вăхăтăнвăхăтăн барабан хупăлчине уçса чуста нÿрлĕхне тĕрĕслет, труба тăрăх шыв мĕнле килнине сăнать. Акă, барабана çăнăх нормăна пăхнинчен ытларах пырать. Прессовщица машинăн пĕр ручкине аялалла пусрĕ, шыв пымалли крана кăштах пăрчĕ. Унтан тепĕр хут чустана сăнарĕ.—Аван, макарон лайăх пулать, — шухăшласа илче вăл.

Макаронпа рожки тума каякан чустан нÿрелĕхĕ 30 процент, вермишельпе лапша тума каякан чустан нÿрелĕхĕ 28 процент пулмалла. Çак нормăна пурнăçламасан, прессовщица кăлăшле, продукци çинче «ракса» пулать.

Тарасова юлташ фабрикăра 15 çул ытла ĕçлет. Çак хушăра вăл темиçе çамрăка прессовщица специальноçне тунма пулăшнă. Аста прессовщицăна фабрикăра ĕçлекенсем юратаççĕ, хисеплеççĕ. Ĕçре хастарлăх катартнăшăн тата чи лайăх продукци туса кăларнăшăн ăна грамота парса хисепленĕ.

— Эпĕ ĕç хаварлăхне татах ÿстерме тăрăшатăп,—тет работница. — Партипе правительство апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларас тĕлĕшпе йышăннă постановлени мана чĕререн савăнтарать. Стахановла ĕçлесе, сменăри задание куллен 140—150 процент тултарма ĕмĕтленетĕп.

Пресс барабанĕнче çăрнă чустана хĕстерсе тĕрлĕ формăсем витĕр кăлараççĕ. Çак формăсене улăштарса лартсанах, тĕрлĕ изделисем — макарон, вермишель, рожки, лапша тата ытти продуктсем туса кăларма пулать. Паян прессем пĕр-ик сехет макарон туса кăларчĕç. Унтан, форма улăштарнă хыççăн, рожки тума тытăнчĕç.

Фабрикăри работницăсен ăсталăхĕ пысăк. Кашни çын хăйне шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа, мĕн вăй çитнĕ таран тума тăрăшать.

Антонина Семенова фабрикăра ĕçлеме тытăнни икĕ çул çеç-ха. Апла пулсан та вăл темиçе специальность туянна. Паян Антонина пресран тухакан чĕрĕ макарона каса-каса ещĕксем çине хурса пычĕ.

— Çак ĕçре тимлĕ пулни кирлĕ,—терĕ Антонина хăйĕн ĕçĕ çинчен каласа пама ыйтсан.—Кăшт асăрхамасанах форма витĕр тухакан макарон тăтăлса тăкăнма пуçларать.

Унпа юнашар ĕçлекен Галина Гусакина та ăста работница шутланать. Ÿкерчĕк çинче эпир Антонинăпа (малти ретри) Галинăна ĕç вырăнĕнче куратпăр. Паян вĕсем иккĕшĕ те сменăри задание чылай иртнерсе тултарчĕç.

Формовочнăй цехра лапша тумалли тепĕр станок пур. Таса тумланнă работницăсем чустана машина витĕр кăларнă хыççăн, ăна çаврака чĕркесе, барабан çине вырнаçтарса лартаççĕ. Барабан татти-сыпписĕр çаврăнать. Чĕрĕ лапшана ещĕке хураççĕ те типĕтекен цеха леçеççĕ.

Ку цехра ретĕн-ретĕн вырнаçтарса тухнă ещĕксем ăшне макарон, вермишель тата лапша тултарнă. Типĕтмелли камерăсенче ăшă сывлăш 40—45 градус таран. Цехра типĕтнĕ продуктсене хутран тунă коробкăсемпе ещĕксем ăшне тултараççĕ. Ÿкерчĕк çинче фабрикăри паллă стахановка Зинаида Федоровна Христусова вермишеле çуршар килограмăн виççе пĕчĕк коробкăсем ăшне тултарать. Паян тусă хăларнă хатĕр продукцин хисепĕ пысăк.

Ку цехсенчи пекех çăнăх алавая, йывăç ещĕксем тăвакан, механически цехсенче те хĕрÿ ĕç пырать.

Лаборатори — продукци пахалăхне тĕрĕслемелли вырăн. Тĕрлĕ кĕленчесемпе пробиркăсем лартса тунă сĕтелсем умĕнче лаборанткăсем ĕçлеççĕ. Вĕсем макаронпа лапша йÿçеклĕхĕпе нÿрĕлĕхне санаççĕ, уйрăм бригадăсем технологи дисциплинине менле пурнăçланине палăртаççĕ. Лаборатори фабрика дирекцине пахa канашсем парса производствăна лайăхлатма пулăшать. Ÿкерчĕк çинче техника пайĕн начальникĕ Иванова юлташ М. Тарасова юлташ ертсе пыракан бригада туса кăларнă макарон пахалăхне тĕрĕслеине катартнă.

Техникăлла тĕрĕслÿ пайĕн начальникĕ А. Иванова юлташ лабораторире.

Фабрикăри рабочисем, пурте тенĕ пекех, сменăри задание яланах иртнерсе тултараççĕ. Юлашки вăхăтра кунта стахановецсемпе новаторсен йышĕ чылай ÿснĕ, чи лайăх продукци туса кăларакан бригадăсем пур. Фабрика продукци туса кăлармалли çулталăкри плана декабрĕн 3-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Шупашкарти макарон фабрикин пуласлăхĕ пысăк. Юлашки çулсенче кунта хăватлă çĕнĕ оборудовани кÿрсе килнĕ. Çапла, кăçал механически цех çĕнĕ техникăпа пуянланчĕ. Çитес çулта формовочнăй цех валли тепĕр пресс илсе килме палăртнă. Çак машинăпа куллен тăватă тонна ытла макарон туса кăларма пулать. Кунсăр пуçне иккĕмĕш пăс хуранĕ вырнаçтарса лартма палăртнă. Фабрикăн производство хăвачĕ ÿйлланни ĕçсыннисем валли лапша, вермишель, макарон тата ытти продуктсем туса кăларассине палăрмаллах ÿстерме май парать.

З. Христусова юлташ вермишеле коробкăсем ăшне тултарать.

Тексчĕ Н. Герасимовăн.
Фотоÿкерчĕкĕсем С. Викториновăн.

Актив тăрăшнипе

СОВЕТСКИ. Районти организацисемпе учреждениесене, колхозсемпе шкулсене тата МТС-ра 1954 çулшăн хаçат-журнал сарас енĕпе почтальонсемпе общественнăй уполномоченнăйсем тата çыхăну работникĕсем хастарлă ĕçлеççĕ. МТС-ри общественнăй уполномоченнăй П. Николаев юлташ 9 пин тенкĕлĕх ытла, пурĕ 460 экземпляр, хаçат-журнал çырăнтарчĕ.

Хаçат-журнал çырăнтарас енĕпе çавăн пекех Хучаш почта уйрăмĕ (начальникĕ Свешникова юлташ) аван ĕçлет. Кунта 8 пин тенкĕлĕх (416 экземпляр) хаçат-журнал çырăнтарнă.

Район центрĕнче ĕçлекен письмоносец Т. Скворцова юлташ та хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пырать.

КПСС райкомĕпе комсомол райкомĕ тата общественнăй организацисем пулăшнипе ĕçсыннисене хаçат-журнал çырăнтарма коммунистсемпе комсомолецсенчен тата учительсенчен общественнăй уполномоченнăйсем 51 çын уйăрнă, хаçат-журнал çырăнтармалли 10 пункт уçнă. «Дружба» колхозри пункт (заведующийĕ Г. Александров юлташ) тăрăшса ĕçлет. Çак колхоз районти пысăк колхозсенчен пĕри шутланать. Кунта хаçат-журнал çырăнтарас енĕпе ĕçлеме комсомолецсенчен общественнăй уполномоченнăйсем 8 çын уйăрнă. Вĕсем тăрăшнипе «Коммунизм ялавĕ» хаçат 75 экземпляр, «Советская Чувашия»—62 экземпляр, районта тухса тăракан «Совет ялавĕ» хаçат 120 экземпляр тата ытти хаçат-журналсем те чылай çырăнтарнă. Колхозри почтальон Майоров юлташ хăйне хаçат-журнал çырăнтарма панă плана пĕтĕмпех тултарчĕ. Колхозри кашни киле хаçат е журнал килсе тăмалла пултăр тесе кунта халĕ те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Районти больницăри общественнăй уполномоченнăй А. Тимофеева юлташ тăрăшнипе больницăра ĕçлекен кашни работник икшер экземпляртан кая мар, пĕтĕмпе 100 экземпляра яхăн, хаçат-журнал çырăннă.

Почта работникĕсен, хаçат-журнал çырăнтарас енĕпе ĕçлекен общественнăй уполномоченнăйсен тата почтальонсен октябрь уйăхĕнче пуçса иртнĕ пухăвĕнче эпир республикăра тата центрта тухса тăракан хаçат-журналсене пĕтĕмĕшпе илмелли декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне çырăнтарса пĕтерме йышăнтăмăр. Декабрĕн 4-мĕшĕ тĕлне «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия», «Çамрăк коммунист», «Молодой коммунист» хаçатсене, «Агитатор блокночĕ», «Тăван Атăл» альманаха тата центрта тухса тăракан хаçатсемпе журналсене («Сельское хозяйство» хаçатсăр пуçне) пурне те çырăнтарса çитерти. «Сельское хозяйство» хаçата та çак кунсенчех çырăнтарса çитеретпĕр.

Эпир хаçат-журнал çырăнтарас ĕçе кăçал, ытти çулсемпе танлаштарсан, чылай малтан вĕçлетпĕр. Çак енĕпе пире КПСС райкомĕ куллен пулăшса тата ертсе пырать.

В. ФЕДОРОВ,
«Союзпечатĕн» Советски районĕнчи организаторĕ.

Квартал планне ирттерсе тултарнă

КРАСНОАРМЕЙСКИ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Узловой мĕслетпе ĕçлесе, МТС тракторсем юсамалли квартал планне ирттерсе тултарчĕ.

МТС коллективĕ çавăн пекех октябрьпе ноябрьте ялхуçалăх машинисем юсамалли плана та ирттерсе тултарнă. Халĕхи вăхăтра, тракторсем юсас ĕçе хăвăртлатса пынипе пĕрлех, ялхуçалăх машинисем юсамалли квартал планне декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешетпĕр.

Н. АНДРЕЕВ,
МТС директорĕ.

Техникăлла нормировани ĕçне лайăхлатмалла

Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съезĕнче туса панă докладра çакна палăртрĕ: нумай предприятисенче техникăлла нормировани ĕçне çителĕксĕр йĕркеленĕ, опытлă-статистикăллă текен нормăсемпе, производство техникин кучĕчĕ ти шайĕне килĕшсе тăман, малта пыракан рабочисен опытне шута илмен, ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшман нормăсемпе ытларах усă кураççĕ.

Çак çитменлĕхсем Канашри вагонсем юсакан заводра та пур. Мĕнпур нормăсенчен 80 процентĕ опытлă-статистикăллă нормăсем. Станокпа тумалли ĕçсенче техника енĕпе никĕсленĕ нормăсем 31 процент, алăпа тумалли ĕçсенче—6,6 процент кăна йышăнса тăраççĕ. Мĕнпур рабочисенчен 70 процентĕ кăна сдельнăй ĕçлеççĕ, ыттисене вара уйăхшарĕн ĕç укçи тÿлеççĕ.

Завод ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана уйăхран уйăхах тултараймасть. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче ăна 92,3 процент кăна тултарнă; иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхĕ чылаях чакнă. Çав вăхăтрах ĕç укçи фондне 1.272 пин тенкĕ ытлашши расходланă. Çак пысăк çитменлĕхсем, тĕпрен илсен, заводра техникăлла нормировани аван йĕркеленнинчен килнĕ.

Вагонсем юсакан заводсенче ĕç тухăçлăхĕн шайне кашни рабочи пуçне пĕтĕм продукци мĕн тенкĕлĕх туса кăларнине шута илсе палăртма йышăннă. Çапла ăнлансан, пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана тултарсан, рабочисем йышĕ планпа палăртнă чухлĕ пулсан, вĕсем нормăна тултарса тата ирттерсе тултарса пырсан [illegible] завод ĕç тухăçлăхне ÿстерме планне пурнăçлама пултарать.

[illegible] çав уйăх кăтартăвĕпе вăхăтра мĕнле пурнăçланине пăхса тухасшăн.

Пĕтĕм продукци туса кăлармалли 11 уйăхри плана завод 101,1 процент тултарнă, çав вăхăтрах рабочисен йышĕ планпа палăртнинчен 7,8 процент ытларах пулнă.

Çакăнта илсе кăтартнă цифрăсенчен акă мĕн курăнать: рабочисем кирлинчен чылай ытларах пулсан та, завод пĕтĕм продукци туса кăларассине планпа палăртнинчен пăртак çеç ÿстернĕ. Ку вăл, пурипчен ытла, техникăлла нормировани енĕпе пысăк çитменлĕхсем пулнинчен килнĕ. Вĕсене пĕтермесĕр завод ĕçне малалла лайăхлатасса кĕтме çук.

Техникăлла нормировани ĕçĕнче мĕнле çитменлĕхсем пур тата вĕсене пĕтерес тесе, мĕн тумалла?

Калас пулать, юсав ĕçĕсене техникăлла нормировани тума кансĕртерет. Ăна юсав ĕçĕсем тĕрлĕрен пулнипе тата пулакан цехсенче нумай процессене алăпа тунипе ăнлантарса памалла, çавна пула прогрессивлă нормăсемпе усă курма та кансĕр. Апла пулин те, заводра техникăлла нормировани ĕçне япăхтарса янине çав сăлтавсемпех ăнлантарса пама май çук. Заводри нумай цехсем (литейнăй, тимĕрçĕ, механически, йывăç пайсем тăвакан цехсем) пĕтĕмпех çĕнĕ продукци туса кăлараççĕ. Апла пулсан, вĕсенче техникăлла нормировани тивĕçлипе туса пыма лайăх майсем пур. Тĕрĕссине илсен вара ку енĕпе асăннă цехсенче пысăк çитменлĕхсем пур.

Техника енĕпе тĕрĕс никĕсленĕ нормăсем тума заводра кирлĕ хатĕрлемелли технологи карттисем кирлĕ. Вĕсене тума цехсенче нормировщиксемпе мастерсене стахановецсен опытне вĕренме хистет тата организацилле-техникăлла мероприятисене пурнăçа кĕртессишĕн ответлăха ÿстерет. Çакă вара, юлашкинчен, прогрессивлă нормăсемпе тата расценкăсемпе усă курма май парать. Апла пулин те, заводра технологи карттисем туса хатĕрлесси çине питĕ сиелтен пăхаççĕ. Нумай узелсемпе деталсем пирки çав карттăсем халĕ те çук. Юсав ĕçне комплект тăвакан цехра, сăмахран, деталсен 30 процентĕ валли кăна технологи карттисем туса хатĕрленĕ. Тимĕрçĕ цехĕпе механически цехра та çавнашкалах темелле. Тепĕр çитменлĕх вăл технологи процесне çĕнетнĕ май, çав карттăсенче тивĕçлĕ улшăнусем туманни пулать. Çавна пула нумай нормăсене темиçе çул хушши ĕнтĕ çĕнĕрен пăхса тухмаççĕ. Акă, механически цехра тормоз валликĕсене виççе шăтармалли нормăна 1950 çултанпа, тормоз рычагĕсене шăтармалли нормăна виçĕ çул хушши ĕнтĕ пăхса тухман.

Кунсăр пуçне, çакна палăртмалла: технологи процесне улăштарнă е пĕр-пĕр рационализаторла сĕнÿ панă пулсан та, вăхăтпа расценка нормине чакарас вырăнне ÿстереççĕ. Шăнтăр тимĕрçĕ цехĕсенче тормоз башмакĕсен колвоскисене тăвассине лайăхлатма рационализаторла сĕнÿ панă. Çакă вăл ĕç тухăçлăхне ÿстерме тата пахалăха лайăхлатма май пачĕ. Анчах çав деталсене туса хатĕрлемелли вăхăтпа расценкăсене ним сăлтавсăрах ÿстерсе янă.

Прогрессивлă нормăсене технологи процесне пур енĕпе те тĕплĕн тĕпчесе пăхнă хыççăн тумалла. Вĕсене тунă чухне материалсене электроэнерги парса тăрас ĕçсенчи тата ытти çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмалла. Прогрессивлă нормăсене тунă чухне малта пыракансен опытне вĕренни уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Çакă вара малта пыракансен меслечĕсене пĕтĕм коллектив хушшинче анлă сарма пулăшмалла.

Калас пулать, заводра çак ĕçсене çителĕксĕр туса пыраççĕ. Уйрăм факторсем тухăçлăха ÿстерме мĕнле пулăшнине тĕпчесе пĕлмеççĕ, ăнăçлă ĕçлеме чăрмантаракан çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Акă пĕр тĕслĕх. Вагонсене пухма хатĕрлекен цехри нумай рабочисем çулла ĕç тухăçлăхне чакарчĕç. Ку вăл кислород тата бригадăсенче рабочисем кирлĕ чухлĕ пулманнинчен килнĕ (нумай рабочисем отпуска кайнă пулнă). Заводри ĕç укçи пайĕпе цех администрацийĕ, асăннă çитменлĕхсем мĕнрен килнине тĕпчесе пĕлмесĕрех, расценкăсене ним сăлтавсăрах пысăклатнă та нормăсене чакарнă. Маларах асăннă çитменлĕхсем халĕ ĕнтĕ çук. Çапах та пысăклатнă расценкăсем халĕ те вăйрах тăраççĕ.

Заводра техникăлла нормăсене пĕрлех опытлă-статистикăллă нормăсем те пур, терĕмĕр. Техникăлла нормăсенче те хăшпĕр çитменлĕхсем пур, анчах вĕсем тĕрĕсрех нормăсем пулса тăраççĕ. Вĕсене тултарас е ирттерсе тултарас тесен, рабочи никĕсе ĕçлемелле, творчествăлла пуçарулăх кăтартмалла, малта пыракан меслетсемпе усă курмалла. Çав вăхăтрах опытлă-статистикăллă текен нормăсене кирек хăш рабочи те ÿрĕк-сÿрĕкĕн ĕçлесех тултарма пултарать. Сăмахран, юсавпа комплект цехĕнче гайка деталь касса тумалли нормăна кирек хăш рабочи те 3—4 хут ирттерсе тултарма тата уйăхне 1.500—1.600 тенкĕ укçа ĕçлесе илме пултарать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен кунта опытлă-статистикăллă текен нормăсемпе усă кураççĕ.

Кустăрма цехĕнче техника енĕпе никĕсленĕ нормăсемпе усă кураççĕ. Цехри токарьсем нормăна 100—150 процент, малта пыракан стахановецсем (сăмахран, Даутова, Блохин юлташсем) 200—300 процент тултараççĕ. Ку цехра ĕçлекен рабочисен квалификацийĕ те пысăк пулни кирлĕ.

Илсе кăтартнă тĕслĕхрен акă мĕн курăнать: опытлă-статистикăллă текен нормăсене мăхтанах чакарса тунă, çавăнпа та вĕсем участоксемпе цехсен коллективĕсене малтисемпе танлашассишĕн кĕрешме мобилизацилемеççĕ, ĕç тухăçлăхне малалла ÿстерме чăрмантараççĕ.

Лашапа ĕçлекен рабочисем заводри маневр тăвакан паровус машинисчĕсенчен яланах ытларах укçа илеççĕ. Çав вăхăтрах лавçăсем иккĕмĕш разрядпа, машинистсем вара — 7-мĕш разрядпа ĕçлеççĕ. Заводри чугун çул ăнăçлă ĕçленинчен мĕнпур цехсен ăнăçлăхĕ килет. Квалификациллĕ рабочисене тивĕçлипе хавхаланни цехсенче те палăрать. Механически тата инструментальнăй цехсенчи токарьсем вагонсем пухакан цехсенчи 3—4-мĕш разрядпа слесарьсенчен сахалтарах ĕçлесе илеççĕ. Çав çитменлĕх рабочисене хăйсен квалификацине ÿстерме хытă чарса тăрать.

Рабочисене хавхалантарас шутпа чи кирлĕ ĕçсемшĕн сдельнă тÿлемелле тунă. Унсăр пуçне, нормăсене ирттерсе тултарнăшăн рабочисене преми параççĕ.

Ку тĕлĕшпе те заводра пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртмалла. Юсавпа комплект цехĕнче, сăмахран, питĕ кирлĕ деталсене юсанăшăн преми памалла тунă. Çавăн йышши деталсем пĕтĕм деталсен 25 процентĕ чухлĕ кăна. Çавăнпа та смена тăршшĕпех уйăх пек деталсене юсама май килмест. Апла пулсан, мĕнле деталсене юсаса нормăна ирттерсе тултарнине шутласа пăхма йывăр. Çавна туни пĕтĕм деталсене мĕн чухлĕ юсанине шута илсе укçа тÿлеççĕ.

Çакăн пек йĕрке, паллах, рабочисене лайăхрах ĕçлеме мобилизацилемест, мĕншĕн тесен пĕр сменăра преми илме май паракан деталсене ытларах юсамалла пулать, тепринче вара—ун пек деталсем пачах пулмаççĕ. Ку йĕрке вăл халăхи расценкăсенчен ирттерсе ĕç укçи хушса тÿлени кăна пулать.

Кислород станцийĕ пилĕк çул каялла тăлăкне 200 баллон кислород туса кăларнă. Халĕ вара 50 баллонран ытла кислород тунăшăн преми памалла тунă. Тăлăкне 50-шар баллон кăна кислород туса кăларсан, завод униче пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă пулĕччĕç. Çакăн пек çитменлĕхсем тата нумай илсе кăтартма пулать.

Техникăлла нормировани ĕçне лайăхлатасси инженерсенчен, цехсенчи нормировщиксенчен нумай килет. Вĕсен пĕлĕвĕсене тăтăшах ÿстерсе пымалла. Производство процесĕсене тĕплĕн пĕлнĕ чухне кăна тĕрĕс нормăсем туса пулать.

Анчах заводра нормировщиксене пĕр цехран теприне куçарас сиенлĕ йăлана халĕ те пĕтермен-ха. Кăçал кăна 5 нормировщика пĕр цехран теприне куçарнă. Нормировщица Гурьева юлташ виçĕ çул хушшинче виçĕ цехра пулма «ĕлкĕрнĕ». Паллах, çакăн пирки вăл нормăсене тĕрĕс тума мар, производствăна пĕлме те ĕлкĕреймен.

Техникăллă нормăсемсĕр планлă хуçалăха ертсе пыма çук. Вĕсем малта пыракансене малтисене танлаштарма кирлĕ. Техника енĕпе никĕсленĕ нормăсем производство техникин кучĕчĕн шайне тата малта пыракан рабочисен опытне шута илме май параççĕ. Çавăнпа вĕсем ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешĕве хăвăртлатма пысăк вырăн йышăнаççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ техникăлла нормировани ĕçне тивĕçлипе туса пырас пулать.

Н. ХАРИТОНОВ,
[illegible]

Ĕç укçи ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс Ассошиэйшн агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть чугун çулсен арбитражнăй трибуналĕ Англири 400 пин чугун çул работникĕн ĕç укçине кăштах ӳстерме сĕннĕ пулнă.

Енер чугун çул работникĕсен Наци профсоюзĕн, чугун çул служащийĕсен ассоциацийĕн тата машинистсемпе кочегарсен Пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн (чугун çул рабочийĕсене пĕрлештерсе тăракан виçĕ профсоюз) руководителĕсен ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта пĕр кăмăллă пулса ĕç укçине çителĕксĕр ӳстернине йышăнма килĕшменни çинчен тата Британири транспорт комиссийĕн (Англири национализациленĕ чугун çулсене тытса тăракан орган. — Ред.) представителĕсемпе нимĕн тăхтаса тăмасăр тĕл пулассси çинчен решени йышăннă. Транспорт комиссийĕн представителĕсене лару йышăннă çак решени çинчен пĕлтермелле.

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер виçĕ миллион çынна пĕрлештерекен судпĕсем тăвакан тата машинăсем тăвакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕсен конфедерацийĕн исполкомĕ; ĕç укçине 15 процент ӳстерессиçинчен лартнă требованине предприяти хуçисем йышăнманнине хирĕç протестлесе, ĕççыннисене çĕнĕ çулта пур çĕрте те сдельнăй ĕçлеме тата ĕç хыççăн юлса ĕçлеме килĕшмелле мар тесе чĕнсе каланă. Исполком декабрĕн 23-мĕшĕнче Лондонра канашлу пухать. Канашлăва конфедераципе кĕрекен 39 профсоюзăн руководителĕсем хутшăнаççĕ.

Италири государство служащийĕсен пĕтĕмĕшле забастовки

РИМ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кӳрсĕр тĕлĕнче государство учрежденийĕсемпе социальнăй страховани, социальнăй обеспечени органĕсенче ĕçлекен служащисем 24 сехетлĕхе забастовка тума пуçланă. Забастовка пĕтĕм çĕршывĕпех саралнă.

«Унита» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, забастовкăна 1.300 пине яхăн служащи, вăл шутра мĕнпур министерствăсен работникĕсем, чугун çул работникĕсем, çавăн пекех оборона министерствин аллинче тăракан предприятисенчи ĕççыннисем. шут палатин, статистикăн центральнăй институчĕн, муниципальнăй тата провинцири советсен служащийĕсем хутшăнаççĕ.

Майтанлăва илнĕ сведенисем тăрăх, забастовка çĕршыври мĕнпур хуласенче организованно пуçланнă. Чи пысăк чугун çул центрĕсенче, çăмăтран, Рим, Милан, Болонья, Флоренци, Турин тата Неаполь хулисенче, поездсем çӳресси пĕтĕмпех чарăнса ларнă е вĕсенчен пĕр пайĕ кăна çӳрет.

Забастовкăна государство служащийĕсем ĕç укçи ӳстерме лартнă требованине хӳтĕлесе тата правительство ырланă закон проектне хирĕç протестлесе пуçланă.

Забастовка вăхăтĕнче тĕрлĕрен политикăлла юхăмсенчи профсоюзсене — Пĕтĕм Италири ĕçлев конфедерацине, çавăн пекех христианла демократсемпе социал-демократсен влиянийĕнче тăракан профсоюз центрĕсене кĕрекен профсоюзсене — пĕрлешнĕ ĕççыннисен пĕрлĕхĕ пысăк пулăшу кӳрсе тăрать.

Иранри лару-тăру

ТЕГЕРАН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Кейхан» тата «Эттелаат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 8-мĕшĕпе 9-мĕшĕнче Тегеран университетĕнчи студентсем, Иранпа Англи хушшинче тепĕр хут дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пуçăннине хирĕç протестлесе, занятисене пыман. Çак кунсенче Тегеранри вăтам шкулсенче те демонстрацисем пулса иртнĕ.

Правительство решени йышăннă тăрăх, Джехром тата Феса хулисенче виçĕ уйăхлăха вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хурасси çинчен пĕлтернĕ.

ФРАНЦИРЕ ШЫВ ИЛНИ

ПАРИЖ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак эрне пуçламăшĕнче Эро департаменчĕнче (Кăнтăр Франци) шыв илнĕ. Çавна пула виçĕ çын çын сиен курнă. Сиен пĕр миллиард франклăх ытла пулнă тесе шутлаççĕ. Шыв илнин сăлтавĕ — вăйлă çумăрсем çуни тата Эроша Орб юханшывĕсем тулни. Орб юханшывĕ сарăлнипе Безье хулинчи чылай кварталсене шыв илнĕ. Хулари хăшпĕр пунктсенче шыв çуртсен иккĕмĕш хучĕ çулĕшне çитнĕ.

Ĕнер Безье хули районĕнче шыв чакма пуçланă.



Польша Халăх Республики. Силезире тăвакан «Явожно-II» электростанци çĕршыври чи пысăк электростанци пулать. Çак пысăк предприятие Совет Союзĕ тăвама пулăшнипе тăваççĕ. Станцире Совет çĕршывĕнче тунă чи çĕнĕ оборудовани вырнаçтарса лартаççĕ. Малтанхи икĕ турбина ĕçлеççĕ, çĕршыва электричество токĕ парса тăраççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Явожно-II» электростанци.

Польшăри рабочисен пĕрлешӳллĕ партийĕн съезчĕ умĕн

ВАРШАВА, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикинче Польшăри рабочисен пĕрлешӳллĕ партийĕн II-мĕш съездне хатĕрленеççĕ. Шахтăсенче, заводсенче, фабрикăсенче тата çĕнĕ стройкăсенче съезд умĕнхи социализмла ăмăрту сарăлса пырать.

Малта пыракан предприятисем тата промышленность отраслĕсем çулталăкри производство планĕсене срокчен тултарни çинчен рапортсем параççĕ. Лодзь хулинчи Мархлевский ячĕпе тăракан фабрикăри пир-авăр тĕртекенсем ноябрь уйăхĕнче çĕршыва планран ирттерсе 600 пин метра яхăн пир-авăр тĕртсе панă. «Новая Гута» ятлă питĕ пысăк металлурги завочĕн электростанцине тăвакансем, графикран ирттерсе, хурав тата пысăк турбоагрегат вырнаçтарса лартнă çĕрте пысăк хăвăртлăхсемпе ĕçлеççĕ.

Польшăри рабочисен пĕрлешӳллĕ партийĕн вырăнти организацийĕсенче Польшăри рабочисен пĕрлешӳллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн IX-мĕш пленумĕ йышăннă тезиссене сӳтсе явасси сарăлсах пырать. Тезиссенче ултă çуллăхри юланки икĕ çул хушшинчи (1954—1955 çулсем) экономикăлла тĕп задачăсене тата çĕршывра ялхуçалăх производствине çĕклес тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсене палăртнă. Воеводствăсенчи парти комитечĕсен пленумĕсене, воеводствăсенчи парти активĕн пухăвĕсене, çавăн пекех уездсенчи парти комитечĕсен пленумĕсене тата уездсенчи парти активĕн пухăвĕсене съезд умĕнхи тезиссене сӳтсе явас шутпа ирттернĕ. Хальхи вăхăтра çĕршывра пуçламăш парторганизацисенче пухусем пулса иртеççĕ.

Парти ĕçĕн программине тезиссенче çырса кăтартнă. Вăл программăна партин анлă массисем, çавăн пекех пĕтĕм Польша халăхĕ хĕрӳллĕн ырлать.

Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх правительство Совечĕн ларăвĕ

ПЕКИН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Женьминьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Центральнăй Халăх правительство Совечĕн 29-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта Центральнăй Халăх правительствин председателĕ Мао Цзе-дун, председатель заместителĕсем Чжу Дэ, Лю Шао-ци, Ли Цзи-шэнь, Чжан Лань, Гао Ган тата Центральнăй Халăх правительство Совечĕн ытти членĕсем пулнă.

Ларура Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республики хушшинче пĕр-пĕринпе экономика тата культура енĕпе çыхăнса ĕçлесси çинчен тунă килĕшӳве пĕр кăмăллă пулса çирĕплетнĕ, çавăн пекех Государствăн халăх хуçалăхĕн 1954 çулхи строительство заемне кăлармалли положение çирĕплетнĕ.

Болгарире суту-илӳ аталанать

СОФИЯ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕççыннисен пурнăç условийĕсем лайăхланнипе пула Болгарире социализмла суту-илӳ хăвăртлăхсемпе аталанса пырать. Государствăпа кооператив секторĕ суту-илӳре халăхи вăхăтра çĕршыври пĕтĕм тавар çаврăнăшĕн 99,3 процентне йышăнса тăрать. Таварсене вакка сутакан магазинсен хисепĕ 1948 çултан пуçласа 1952 çулччен икĕ хут ӳснĕ. Виçĕ çул хушшинче — 1950—1952 çулсенче — хуласенче 2.500 магазин ытла, ялсенче 4.000 магазин çĕнĕрен уçнă. Çавăн пекех обществăлла апатлану предприятийĕсен шучĕ те ӳснĕ.

Çĕрĕç кооперации хуçалăхĕсем хуларн пасарсенче ялхуçалăх продукчĕсемпе суту-илӳ тăвасси анлăн сарăлса пырать. Кăçалхи иккĕмĕш кварталта хулари пасарсенче ялхуçалăх продукчĕсем сутасси, иртнĕ çулхи çак тапхăрпа танлаштарсан, тăватă хута яхăн ӳснĕ.

Наци пухăвĕн депутачĕсен ушкăнĕ Польшăра

ВАРШАВА, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Францири Наци пухăвĕн депутачĕсем Польшăна пынă. Вĕсем ĕнер Польша Халăх Республикин сейм депутачĕсемпе тĕл пулнă. Польша тата Франци депутачĕсем пĕр-пĕрин шухăшне ытса пĕлмĕ тата Польшăпа Франци хушшинчи туслă çыхăнусем çинчен сӳтсе явнă.

Ют çĕршывсемпе культура тĕлĕшĕнчен çыхăнса ĕçлекен Польша комитечĕ Францири Наци пухăвĕн депутачĕсем Польшăна пынă ятпа йышăну ирттернĕ. Пышăнура Польша Халăх Республикин сеймĕн депутачĕсем, çавăн пекех культурăпа наука представителĕсем пулнă.

Демократиллĕ Германи Республикипе Франци хушшинче суту-илӳ килĕшӳвĕ тунă

БЕРЛИН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 1953 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче Берлинра Францие Демократиллĕ Германи Республики хушшинче пĕр-пĕрне таварсем тăрасси тата тӳлевсем çинчен суту-илӳ килĕшӳвĕ тунă. Пурĕ 8,3 миллион долларлăх тавар парса тăмалла.

Франци Демократиллĕ Германи Республикине улма-çырла, кофе, какао, апата тутă кĕртекен япаласем, ӳсентăран çăвĕ, хĕрлĕ ерех, çăм, çăм пир-авăр, химикалисем, прокат изделийĕсем тата ытти таварсем те парса тăмалла.

Демократиллĕ Германи Республики Францие машиностроени изделийĕсем, механикăпа оптика изделийĕсем, химикалисем, музыка инструменчĕсем, мотоциклсем, кантăк тата керамика изделийĕсем парса тăмалла.

Икĕ енĕ те çитес 1954 çулта çак суту-илӳ килĕшӳвне пысăклатасси çинчен калаçусем ирттерме килĕшнĕ.

ИКУО ОЯМА ТОКИОРИ МИТИНГРА ТУХСА КАЛАНИ

ШАНХАЙ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕм тĕнчери Сталинла премиий лауреачĕ Икуо Оямă Токиори университетри митингра сăмах тухса каланă. Митинга Ояма Японие таврăннă ятпа ирттернĕ. Икуо Ояма Совет Союзĕпе тата Китай Халăх Республикипе тепĕр хут йĕркеллĕ дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пуçлама чĕнсе каланă. Японири мирĕ хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет пухнă çак митингра 1.500 çын пулнă.

Япони халăхи вăхăтра Совет Союзĕпе тата Китай Халăх Республикипе дипломатиллĕ çыхăну тытмасть пулин те, официальнăй йĕркепе çыхăну тытма пуçличчене Японипе çак çĕршывсем хушшинчи çыхăнусене лайăхлатса пыни кирлĕ, тенĕ Ояма.

Кени халăхне хӳтĕлесе

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Кени ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитет пуçарнипе Англире ĕнер Англи правительстви Кенире тăвакан ĕçсене хирĕç протестлемелли кун ирттернĕ.

Комитет делегацийĕ колонисен министрĕ Литтлтон патĕнче пулнă, âна тĕрлĕ организацисем çырнă темиçе çĕр çыру панă. Çырусенче Кенири вăрçă ĕçĕсене нимĕн тăхтаса тăмасăр чарса, лартма, негрсен лидерĕсене ирĕке кăларма тата Кенири негрсен Союзне ĕçлеме чарнине пăрахăçлама требовани лартнă.

Лондонри тĕп урамсенчен пĕринче демонстраци пулса иртнĕ. Унта хутшăннă çынсем Кенири вăрçă ĕçĕсене чарса лартма тата Англи правительстви ку çĕршыв тĕлĕшпе тытса пыракан политикăна улăштарма чĕнекен плакатсем йăтса пынă.

Кени ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитет майлă тăракан чылай çынсем общинăсен палатине пырса кайнă, вĕсем парламент членĕсене Кени халăхне хӳтĕлессишĕн пыракан юхăма хутшăнма чĕнсе каланă.

МАРШАЛЛА НОБЕЛЬ ПРЕМИНЕ ПАНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕСЕ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Ослоран пĕлтернĕ тăрăх, мир ĕçĕшĕн паракан премие ĕнер США-н государство секретарĕ пулнă Маршалла панă чухне Осло университетĕн актовăй залĕнче листовкăсем пăрахма тытăннă. Листовкăсенче Маршалла преми панине хирĕç протестлесе çырнă. Преми парасси чарăнса ларнă. Листовкăсем салатна çамрăксене полици вăйпах залран кăларса янă.

Листовкăсенче çапла каланă: «Маршалл çынсене йышлăн вĕлерме пысăк вăй хунă генерал пулса тăрать.

Маршалл хăйĕн «Маршалл планĕпе» тата Атлантика пакчĕпе тĕнчене пĕр-пĕринрĕн тăшманла икĕ лагере пайлама пулăшрĕ. Унăн ĕçĕ — вăрçă тата вăрçа хатĕрленесси.

Эпир мир ĕçĕшĕн памалли Нобель премине вăрçă организацилевĕшĕн панине хирĕç протестлетпĕр».

МАРШАЛЛА НОБЕЛЬ ПРЕМИНЕ ПАНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕКЕН ÇЫНСЕНЕ АРЕСТЛЕНЕ

ОСЛО, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегири телеграф бюровĕ пĕлтернинчен çакă паллă: полици виçĕ норвежеца арестленĕ. Вĕсем Маршалл генерала Нобель премине панă чухне листовкăсем салатнă пулнă.

Англи салтакĕсен Суэц каналĕн зонинчи ирсĕр ĕçĕсем

КАИР, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, юлашки кунсем хушшинче Суэц каналĕн зонинче час-часах ирсĕр ĕçсем пулса иртеççĕ. Вĕсем Англин оккупаци çарĕсем провокацисем тунă пирки пулаççĕ.

Хаçат паян премьер-министр заместителĕ Насер акăлчансем Египетри Исмаили районĕнчи Хаватра ялĕ çине тапăнни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Англи çарĕсем яла хупăрласа илнĕ те ун çине вут тивертекен снарядсемпе пенĕ. Çавна пула ялта пушарсем тухнă.

«Аль-Гумхурия» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Англи патрулĕ Исмаили çывăхĕнчи Нефише ялĕ çине автоматсенчен пенĕ. Фазара ялĕнче Англи салтакĕ, виллис çинче хăрса пыракансем, ятти халăх çине пенĕ, пĕр çынна амантнă.

«ПАКИСТАН ТАЙМС» ХАÇАТ США-па ПАКИСТАН ХУШШИНЧЕ ÇАР КИЛĔШĔВĔ ТУНИ ÇИНЧЕН

КАРАЧИ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Пакистан Таймс» хаçат пĕлтерни пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: темиçе кун каярах Пакистанри официальнăй ушкăнсем Америкăпа Пакистан хушшинче çар союзĕ тăвасси çинчен пыракан калаçусем çинчен кирек мĕнле пĕлтерӳне те йышăнмарĕç. Анчах та «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Карачирен «Пакистан хăйĕн кун-çулне Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тата хĕвеланăçри ытти державăсемпе оборона системине çыхăнтарчĕ. Вăл оборона системи Турципе пуçласа Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири стратеги тĕлĕшĕнчен чи паллă районсем таран тăсăлать» тесе пĕлтернĕ хыççăн, çак ушкăнсем никам те шарламаççĕ. Çакăн пек шарламасăр тăни, — тенĕ пĕлтерӳнче, — Пакистан США-па çар килĕшӳне туннне кăтартса пани пулать, тесе шутлаççĕ «столицăра».

Колхозри комсомол организацийĕн ĕçĕсем çинчен ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретариачĕ отчет итленĕ

ВĂРНАР. Ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретариачĕ Кольцовкăри Ленин орденлă Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацийĕн ĕçĕсем çинчен комсомол комитечĕн секретарĕн Социализмла Ĕç Геройĕн Н. Саканин юлташăн докладне итленĕ.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретариачĕ колхозри комсомолецсем уй-хир бригадисен бригадирĕсем Иван Васянинпа Александр Нараткин, выльăх-чĕрлĕх фермипе ĕçлекен Александр Васянин, Нина Бузина доярка тата колхозри ытти çамрăксем ĕçре пысăк ӳсĕмсем тунине палăртнă. Бунпа пĕрлех комсомол организацийĕ колхоз çамрăкĕсем хушшинче политикăлла-массăлла тата культура ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынине асăрхаттарнă.

Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе çамрăксем, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн решенине сӳтсе явнă хыççăн, колхоз производствин пур отраслĕсенче те активлăрах ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем Центральнăй Комитет кăтартса панă ситменлĕхсене пĕтерессишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ.

Н. ЛЕОНИДОВ.

„Чи лайăх тракторист“ ятне панă

«Лесная промышленность» хаçатра çĕршыври вăрман промышленноçĕнче тата сулă юхтарнă çĕрте ĕçлекенсем хушшинче пыракан социализмла ăмăртăвăн виççĕмĕш кварталти итогĕсене пичетленĕ.

СССР Вăрманпа хут промышленность министерстви тата çав промышленноçра ĕçлекенсен профессиллĕ союзĕн Центральнăй Комитечĕ трактористсем хушшинче пыракан социализмла ăмăртура Алтышево вăрманпромхозĕнче ĕçлекен Николай Ильич Вельяев мала тухнине палăртнă.

Вельяев юлташ иртнĕ кварталта «КТ-12» тракторпа 3 пин те 719 кубометр йывăç сул хĕррине илсе тухнă. Ку вăл кашни сменăра 53 кубометр йывăç кăларнине пĕлтерет.

Вельяев юлташа «Чи лайăх тракторист» ятне панă.

МАЛТА ПЫРАКАН ПРЕДПРИЯТИСЕМ

ИШЛЕИ. Çĕктерти вăрман комбиначĕ çулталăкри производство планне ирттерсе тултарчĕ. Кăçал сакăр хвăттерлĕ суртсем чылай туса ăсатнă.

СССР Буллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствипе профсоюзăн Центральнăй комитечĕ Р. Костина, Л. Семенова, Е. Хрисанова юлташсем ертсе пыракан бригадăсене «Лайăх ĕçлекен бригада» ятне панă. Çакăн хыççăн вĕсем ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне тата ӳстерчĕç.

Комбинат коллективĕ çулталăк вĕçленнĕ тĕле планран ирттерсе 400 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларассишĕн кĕрешет.

Ишлейри сĕт-çу заводĕ, типографи, Вырăнти тата топливо промышленность министерствине пăхăнса тăракан вăрманпромхоз çулталăкри плана срокчен тултарчĕç.

В. ЧЕРНОВ.

Медицина ыйтăвĕсемпе калаçусем пулаççĕ

СЕНТЕР. Н. Муллаев юлташ 22 çул ĕнтĕ Ильинкăри фельдшер пунктĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл ялавах халăх хушшинче пулать, медицина пулăшăвĕ парать, медицина пĕлĕвĕсем сарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Кăçал 24 хутчен лекцисемпе докладсем ирттернĕ. Çав кунсенче вăл колхозсенче тата предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсем хушшинче ерекен чирсенчен мĕнле сыхланмалли çинчен калаçусем ирттернĕ.

Н. Муллаев юлташ тăрăшнипе Хĕрлĕ Хĕрес обществин пуçламăш организацисене 4 организациленĕ.

Д. ВЕРШКОВ.

Касхи шкул

ЕЛЧĔК. Молотов ячĕпе тăракан колхозра кăçал ситĕннисем валли касхи вăтам шкул уçрĕç. Шкулта колхозниксемпе колхозницăсем 20 çын вĕренеççĕ. Кăçал VII-мĕш класс программипе вĕренсе пĕтереççĕ. Вĕренӳре уйрăммăнах уй-хир бригадирĕ А. Петров, Акимов, Н. Павлов, Б. Комиссарова колхозниксем малта пыраççĕ. Республикăри паллă машиновод И. Афанасьев та касхи шкулта вĕренет Вĕренӳ çулĕн иртнĕ чĕрĕкĕнче унăн пур предметсемпе те «5» паллă пулнă.

А. КУЧКОВ.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

«ÇĔРУЛМИПЕ ПАХЧА ÇИМĔÇ ХАТЕРЛЕС ТАТА СУТАС ĔÇЕ ВАЙЛАТМАЛЛА»

Чăваш АССР Суту-илӳ министрĕ Гаврилов юлташ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра октябрĕн 23-мĕшĕнче пичетленнĕ «Çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлес тата сутас ĕçсене вăйлатмалла» ятлă статьяра кăтартнă ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе Шупашкар хулинчи суту-илӳ организацийĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăнни, çĕрулмипе пахча çимĕç турттарас ĕçре хула Совет исполкомĕ суту-илӳ организацийĕсене транспорт парса пулăшни çинчен пĕлтерчĕ.

Ĕççыннисен ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтерес шутпа пир-авăр комбиначĕ çывăхĕнче çĕрулмипе пахча çимĕç сутмалли магазин уçнă.

Статьяра Шупашкар хулинчи 17-мĕш номерлĕ магазинта продавщица пулса ĕçлекен Безрукова ĕç вăхăтĕнче магазинта сăрă пулни, тепĕр чухне тавар илме пыракансене ятласа тăни çинчен çырнăччĕ Чăваш АССР Суту-илӳ министрĕ Безрукова продавщицăна администраци енĕпе ответ тыттарни çинчен пĕлтерчĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи колхозсенче

★ **Пысăк тухăçлă хăмла.** Мичурин ячĕпе тăракан колхозра, ытти отраслĕсене аталантарса пынипе пĕрлех, хăмла тăвас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Ку ĕçе опытлă колхозник Н. Николаев ертсе пырать. Пĕр гектар çинчен 13 центнер хăмла туса илнĕ, иртнĕ çулта лартнă 3 гектар çинчи плантацирен те начар мар хăмла тухнă.

Колхоз государствăна хăмла парса 46.836 тенкĕ тупăш илчĕ.

★ **Сыснасем самăртаççĕ.** Сталин ячĕпе тăракан колхоз государство селекци станцийĕ ĕрчетнĕ ăратлă сыснасем усрать. Вĕсем хăвăрт ӳсеççĕ. Кăçал колхоз 29 сысна самăртса, государствăна 3.238 килограмм аш пачĕ. Самăртнă сыснасем 150—180 килограмм таяççĕ.

★ **Кантăртан пысăк тупăш.** Хрущев ячĕпе тăракан колхоз çулсерен кантăртан пысăк тупăш илет. Кăçал вăл государствăна кантăр вăрри парса, 53.220 тенкĕ укçа, 304 центнер тулă, 1.332 килограмм çу тата 3.960 килограмм тырпула илчĕ.

★ **Фермăсене водопровод кĕртеççĕ.** Кăçал «Коммунар» тата Хрущев ячĕпе тăракан колхозсенче выльăх-чĕрлĕх фермисене водопровод тăрăх шыв пымалла турĕç. «Новая жизнь» колхозра та водопровод пур.

Çитес вăхăтра «Пионерстрой» колхозра фермăсене водопровод кĕртсе çитереççĕ.

★ **Колхозри пулăшу касси.** «1905 год» колхозри пулăшу касси вăрçă тата ĕç инвалидĕсене, вăрçăра вилнĕ çынсен çемйисемпе тăлăх ачасене пысăк пулăшу парать. Кăçал пулăшу касси 660 пăт ытла тырă, 2.000 тенкĕ ытла укçа парса пулăшнă. М. Беляева колхозницăна çĕнĕ çурт лартса панă.

★ **Шашка турнирĕ.** «Новая жизнь» колхоз членĕсем физкультурăпа спорт ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Футбол командисен темиçе çул хушши ăнтă республикăри колхоз командисем хушшинче, çавăн пекех районта та мала тухса кубоксем илчĕ.

Шашка-шахмат секцийĕ те начар мар ĕçлет. Нумай пулмасть вăл шахмат турнирĕ ирттерчĕ, унта 11 çын хутшăнчĕ. Ăмăртăва хутшăнакансенчен 5 çын палăмĕш разряда шахматист пулчĕç.

Х. ЛИСИН.

Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче

★ **Вĕренекенсем валли лекцисем.** Техникумра вĕренекенсем валли тĕрлĕ темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем тăтăшах ирттереççĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче «СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕн итогĕсем», «Комсомолăн çапăçури тата ĕçри паттăрлăхĕ», «Вырăссен асла поэчĕ А. С. Пушкин», тĕнчери лару-тăру çинчен тата ытти темăсем тăрăх лекцисем пулнă.

★ **Фотографи кружокĕ.** Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах фотографи ĕçне кăмăлаканасем кружока çӳрекелерĕç. Халĕ кружокра 47 çын вĕренет. Кружокăн тăватă фотоаппарат, лаборатори пур.

★ **Шахмат турнирĕ.** Техникумра шахмат вăййи енĕпе мала тухассишĕн ăмăрту пулса иртрĕ. Унта 20 çамрăк шахматист хутшăнчĕ. Ăмăртура А. Матюшкин çĕнтерӳ тухрĕ.

М. МЕДЯКОВ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Американецсем тыткăнри çар çыннисене „тартма“ хатĕрленеççĕ

ПЕКИН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин Кесонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Инди çарĕсем хуралласа тăракан лагерьтен декабрĕн 9-мĕшĕнче тыткăнри 8 çар çыннине репатриациленĕ. Вĕсен — Китай халăх добровольцисем 3 çын тата Корея Халăх çарĕн 5 боецĕ — пресс-конференцире тухса каланă. Пресс-конференцире çавăн пекех репатриацилес тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комиссин представителĕсем те пулнă.

Китайăн виçĕ халăх добровольцĕ Лу Гуан-и, Хуан Вэнь-цин тата Чун Ши-цин, лагерьти госпитальрĕ вăртăн агентсен контролĕнчен хăтăлса, хăйсене репатриацилеме требовани лартнă пулнă. Инди салтакĕсене тăракан тӳрех хуçалăхлă вăртăн агентсене тыткăнри çар çыннисене вĕлерме памаи. Тыткăнри çар çыннисем çапла пĕлтернĕ: Тонжаннири лагерьтен тыткăнри çар çыннисенчен халĕ те мăшăлласçĕ, вĕсене вĕлерме чăрăнмасçĕ. Америкăн çар çыннисем, гоминдановецсемпе Кăнтăр Корейăн агенчĕсем пулăшнипе, тыткăнри çар çыннисене ушкăнпа «тартма» хатĕрленеççĕ.

Китай халăх добровольцĕ Лу Гуан-и тыткăнри çар çыннисене ирĕксĕр хăвалаçа калесси çинчен Америкăн радиопа панă приказĕ пурри çинчен пĕлтернĕ. Приказра çапла каланă: тыткăнри çар çыннисене Кăнтăр Корейăна, унтан Тайвань утравĕ çине тыткăнри çар çыннисене офицерсем хушни килсе тăмалли вăхăт вĕçлекенĕ юлашки кун ушкăнпа тартмалла.

Лу Гуан-и çапла хушса хунă: çак приказа панă тыççăн тыткăнри çар çыннисене куллен тăватă сехет хушши çар ĕçне вĕрентме тунă.

Корея Халăх çарĕн тыткăна лекнĕ боецĕ Ань Сук Я (вăл 52-мĕш номерлă секторта пурăннă) çакна çирĕплетсе панă: «тарасси» çинчен калакан приказа Америкăн 64-мĕш полевой госпиталĕн медицина персоналĕ урлă панă. Вăл çапла пĕлтернĕ: çĕçĕ-хĕнĕçа тыранăçăр пуçне, вăл пурăннă секторта Ли Сын Ман агенчĕсем бомбă тултарнă пăлăчечесенчен «хут таберсен бомбăсем» туса хатĕрленĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Пай ... ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—6-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-56, секретариат—5-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—18-37, парти пурнăç пайĕ—5-96, ... пайĕ—... , ял хуçалăх пайĕ—5-37, культура пайĕ—6-61, совет строительстви пайĕ—5-54, çырусен пайĕ—7-52, издательство контури—6-23.

НТ 00667 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 3604. Тираж 20.000 экз.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — декабрĕн 13-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль «Не называя фамилий». Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхи 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

САМРАКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — декабрĕн 13-мĕшĕнче кăнтăрла «Страница жизни», каçхине — «Забавный случай».

Кăнтăрлахи спектакль 14 сехетре, каçхи 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК» — декабрĕн 13 мĕшĕнче илемлĕ фильм «Учитель» (çĕнĕ копи).